чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН 2014, пуш /март/ 15

46-47 /26452-26453/ № № Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Саламлатăп

**Чăваш Енĕн пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕн тата халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен ĕçченсем!**

Сире професси уявĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн шанчăклă ĕçĕнчен, унăн ĕçченĕсен ăсталăхĕпе яваплăхĕнчен чылай чухне общество тăнăçлăхĕ тата республикăра пурăнакансем хăйсене мĕнле туясси килет.

Чăваш Енре пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх кĕрекен пулăшу ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе влаç органĕсем конкуренцие аталантармашкăн, управляющи организацисен ĕç-хĕлне тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмашкăн, вĕсен уççăнлăхне ÿстермешкĕн, отрасльти пĕтĕм организацин ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе асăрхаттарусене пĕтермешкĕн тухăçлă мерăсем йышăнаççĕ.

Республикăн потребитель рынокĕн аталанăвĕшĕн халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен сфера та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Паянхи кун йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен 2136 предприяти, вĕсенче 7700 çын ĕçлет. 2013 çулта вĕсем кÿнĕ пулăшу ĕçĕсен калăпăшĕ ÿснĕ, çав хушăрах çак ĕçсен пахалăхне лайăхлатма тăрăшнă.

Кулленех ырми-канми тата таса кăмăлпа ĕçленĕшĕн, хăвăр профессие парăннăшăн сире чунчĕререн тав тăватăп. Сире тата çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, тăнăçлăх, ырлăх тата телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

*Пĕтĕм чăваш диктанчĕ – 2014*

# Тăван чĕлхе кунĕнчех çырăпăр

*Пĕлтĕр кунашкал акци – пĕтĕм халăхпа диктант çырасси – пирĕн тăрăхра пуçласа иртнĕччĕ. Республикăра пурăнакансем вырăс чĕлхин правилисене мĕнлерех ас туни-пĕлнине тĕрĕсленĕ хыççăнах хамăрăн тăван чĕлхен çыру «вăрттăнлăхĕсене» аса илтĕмĕр. Пысăк йышпа иртертĕмĕр çак ĕçе. Диктант çырма республика тулашĕнче пурăнакансем те чылайăн хутшăнни йĕркелÿçĕсене савăнтарнăччĕ.*

Тăван чĕлхе пуласлăхĕшĕн çунакан тĕрлĕ шайри ĕçченсем «пирвайхи икерчĕ те самай ăнăçлă пиçнине» кура пархатарлă ĕçе çуллен йĕркелеме тĕв тунă. Телее, йышăну сăмах шайĕнче юлмарĕ. Çитес вăхăтрах, ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче /ун чухне Тăван чĕлхе кунне уявланине йăхташăмăрсем пĕлеççехтĕр/, шкул ачисем, студентсем, тĕрлĕ ĕçри, тĕрлĕ ÿсĕмри чăваш çыннисем черетлĕ хут алла ручка тытĕç е компьютер умне вырнаçĕç. Пĕтĕм чăваш диктантне çырма кăмăл тăвакансем кăçал И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетне пухăнĕç.


Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕ

Сăмах май – пĕлтерĕшлĕ çак пулăмшăн кăçал гуманитари ăслăлăхĕсен тĕпчев институчĕ яваплă. Информаципе «Хыпар» Издательство çурчĕ, Чăваш наци телерадиокомпанийĕ тивĕçтерĕç.

Пулас диктанта мĕнле темăна халалласси хальлĕхе вăрттăнлăхра. Текст авторĕ кам пулĕ? Тĕп аудиторире ăна кам вулĕ? Çак тата диктант тавра тĕвĕленнĕ ытти ыйтăва йĕркелÿ ушкăнĕн пуш уйăхĕн 17-мĕшĕнче гуманитари ăслăлăхĕсен тĕпчев институчĕ иртекен ларăвĕнче татса парĕç.

■ **Ирина ИВАНОВА**

*Брифинг*

# Тĕрĕслев тата вĕренÿ

*Кăçалхи пуш уйăхĕн 17-26-мĕшĕсенче Раççей МЧСĕн Атăлçи регион центрĕн комиссийĕ Чăваш Енре граждан оборони, халăха тата территорие çут çанталăк, техногенлă синкерсенчен хÿтĕлес, шыв объекчĕсенчи тата пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе комплекслă тĕрĕслев ирттерет.*

"Çакнашкал тĕрĕслевсене ĕç тăвакан влаç органĕсемпе пилĕк çулта пĕрре йĕркелеççĕ", – терĕ Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пуçлăхĕ Станислав Антонов генерал-майор. Ăна хальхинче яваплă тапхăр – ейÿ вăхăчĕ пуçланас тата пушар тухас хăрушлăх палăрмаллах ÿсес умĕн – ирттереççĕ.

**Пуш уйăхĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Енре централизациленĕ хыпарлавăн регионри системин тĕрĕслевĕ иртет. Асăрхаттару сигналне /"Внимание всем!" евĕрлине/ урамри сирена́семпе сасса вăйлатакан хатĕрсем, радио тата телекурав каналĕсем 10 секетре парĕç, çапла майпа граждан оборонин тренировки пуçланнине систерĕç. Çынсен çак вăхăтра пăлханса-хăраса ÿкмелле мар, ĕçе е вĕренĕве малалла тăсмалла.** Аса илтеретпĕр: "Внимание всем!" чĕнÿ – граждан оборонин асăрхаттару сигналĕ. Вăл халăха авари, катастрофа, синкерлĕ лару-тăру, тăшман тапăнас хăрушлăх пурри пирки пĕлтерет. "Сирена, гудок, сигнал ытти хатĕрĕ кăшкăртнине илтсен çынсен радиоприемник е телевизор ямалла, васкавлă хыпара итлемелле. Çак информацие ертÿçĕсене тата ĕçтешсене, çемье членĕсене, кÿршĕсене пĕлтермелле", – терĕ хут аса илтерчĕ Станислав Антонов.

Ку тĕрĕслевсем хыпарлав системи мĕнле тăрăмра пулнине хак пама тата çитменлĕхсене тупма пулăшаççĕ.

Тепĕр эрнерех МЧС службисен пысăк масштаблă вĕренĕвĕ иртет. "Вĕренÿ ахаль граждансене нихăш енĕпе те чăрмав кÿмĕ. Çитменнине, службăсем штат режимĕпех ĕçлĕç, çавăнпа вĕренÿ кунĕсенче пулакан инкексенче те çăлавçăсем çынсене пулăшусăр хăвармĕç", – пĕтĕмлетрĕç брифингра.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

***Пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен куллен тухакан «Хыпар» хаçата 2014 çулăн II çурри валли хальхи хакпа – 460 тенкĕ те 86 пус – çырăнса ĕлкĕрĕр. Ака /апрель/ уйăхĕн 1-мĕшĕнчен почта хаксене ÿстерет. Эрнесерен пичетленекен 16 страницăллă «Хыпар – шăмат куна» 218 тенкĕ те 22 пуспа çырăнса илсен çемье бюджетне пушшех перекетлетĕр. Ака уйăхĕнчен ку кăларăм хакне те пысăклатаççĕ.***

## Уяв ячĕпе

Професси уявĕпе – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн тата халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен ĕçченсен кунĕ ячĕпе хамăрăн коллектива ăшшăн саламлатăп. «Эткер» акционерсен уçă обществинче тăрăшакансем Шупашкарăн Çĕнĕ Кăнтăр районĕнчи хăйсене çирĕплетсе панă вун-вун çуртра пурăнакансен хăтлăхĕшĕн ырми-канми вăй хураççĕ. Сантехник е тирпейлÿçĕ, участок мастерĕ е производство пуçлăхĕ – пурте яваплăха туйса ĕçлеççĕ. Пурне те ăнăçу, çирĕп сывлăх, ăнланулăх сунатăп.

**Валерий ПАВЛОВ,**
**«Эткер» АУО генеральнăй директорĕ,**
**Шупашкар хула Пухăвĕн депутачĕ.**

* * *

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн отраслĕ пирĕн тытăмпа тачă çыхăннă. Хула çыннисен хăтлăхĕ, урам-проспектри тирпей-илем пирĕн организацири ĕçченсенчен те нумай килет. Пирĕн ĕçре вак-тĕвек çук: коллективри кашни çын яваплăха туйса тăрăшать. Хулара пурăнакансем хăйсем те пирĕн ĕçе хаклани, субботник йĕркелесе территорисене тирпей-илем кĕртмешкĕн хастар хутшăнни чунтан савăнтарать. Тĕп хула илемĕпе аталанăвĕшĕн пĕрле тăрăшар, пĕр-пĕрин ĕçне хисеплер.

**Олег СКВОРЦОВ,**
**«Зеленстрой» АХО**
**генеральнăй директорĕ,**
**Шупашкар хула Пухăвĕн депутачĕ.**

**Реклама менеджерĕ кирлĕ**

**«Хыпар» Издательство çурчĕ реклама менеджерне ĕçе илет: Тел.: 56-00-67, 28-83-70.**

# Александр Архиповпа тĕл пулнă

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Атăлçи таможня управленийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕпе Александр Архипов генерал-майорпа ĕçлĕ тĕл пулу ирттернĕ.***

Александр Архипов республика Пуçлăхне Чул хула таможнин çĕнĕ пуçлăхĕпе Юрий Лушников генерал-майорпа – ăна Раççей ФТСĕн 2014 çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнчи хушăвĕпе килĕшÿллĕн çак должноçа уйăрса лартнă – паллаштарнă. 2010 çулхи ака уйăхĕнчен пуçласа 2013 çулхи çĕртме уйăхĕччен вăл Раççей Федерацийĕн таможня службин Кăнтăр Осети Республикинчи представителĕн должноçне йышăннă.

Тĕл пулу вăхăтĕнче Украинăри геополитика лару-тăрăвĕн улшăнăвĕн условийĕсенче, çавăн пекех тавар экспорчĕпе импортне йĕркелессин сферинче килĕштерсе ĕçлессин ыйтăвĕсене сÿтсе явнă. "Эпир регион аталанăвне пулăшмашкăн яланах хатĕр", – палăртнă Александр Архипов.

Михаил Игнатьев таможня ертÿлĕхне Чăваш Ен экономикин ырлăхĕшĕн ăнăçлă çыхăнса ĕçленĕшĕн тав тунă. "Эпир тăтăшах тĕл пулатпăр, информаципе паллаштатпăр, экономика аталанăвне чăрмав кÿрекен факторсене васкавлăн сиретпĕр. Йывăрлăхсене татса панă чухне икĕ енлĕ килĕшÿ патне пырса тухатпăр. Коммерци ĕçĕ-хĕлĕпе аппаланакан предприяти-организаци хăйсен ыйтăвĕсене хăвăрт татса парас тенине ăнланмалла. Çапах, тепĕр енчен, регламентсем, стандартсем пур. Вĕсене пурин те пăхăнмалла", – тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ.

■ **И.БЕЛОВА**

## Митинг иртет

Паян, пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче, Шупашкарта Украинăра пурăнакан ентешĕмĕрсене хавхалантарас тĕллевпе митинг иртет.

Акци Хĕрлĕ лапамра 12 сехетре пуçланать, виçĕ сехет пырать. Унта хутшăнас текенсем хула варринче Крымра пурăнакансен йышăнăвне – Автономи Республикин шăпине палăртасси пирки референдум ирттерессипе çыхăннине – ырламашкăн пухăнаççĕ. Кунашкал мероприяти халĕ пĕтĕм Раççейĕпех иртет. Аса илтеретпĕр: хальхи вăхăтра Крымра Чăваш Енре çуралнă 2,5 пин çын пурăнать.

**И.НИКОЛАЕВА.**

### Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕммĕш сессине пухасси çинчен

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕммĕш сессийĕ 2014 çулхи пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи Правительство çуртĕнче /Президент бульварĕ, 17-мĕш çурт/ 10 сехетре уçăлать.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсемпе чĕннĕ хăнасене пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче Правительство çурчĕн ларусен пысăк залĕн фойинче 9 сехетрен пуçласа регистрацилеççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-65.

# Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи пуш уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 30-мĕш хушăвĕпе килĕшÿллĕн ĕçри çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн "Чул хула Газпром трансгаз" тулли мар яваплă обществăн филиалĕн – Атăл леш енчи магистраль газ пăрăхĕсен линии производство управленийĕн /Красноармейски районĕ/ пуçлăхне **Сергей Алексеевич АЛЕКСАНДРОВА,** Шупашкар хулинчи "3-мĕш стройтрест" акционерсен хупă обществин тĕп диспетчерне **Наталия Васильевна АЛЕКСЕЕВĂНА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

театр искусстви енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата пултарулăхра нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин "Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Халăхсен туслăхĕн орденĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ" автономи учрежденийĕн сцена ертсе пыракан ăстине **Николай Алексеевич ДМИТРИЕВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ АРТИСЧĔ"**;

ветеринари енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн федерацин "Федерацин айăплава пурнăçлакан службин Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри управленийĕн 8-мĕш колони-поселенийĕ" хысна учрежденийĕн ветеринари тĕп врачне **Вячеслав Григорьевич СТЕПАНОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВЕТЕРИНАРИ ВРАЧĔ"**;

культура енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Етĕрне районĕнчи Пĕрçырлан ял тăрăхĕн "Культурăна аталантаракан тата халăха библиотека пулăшăвĕпе тивĕçтерекен центр" муниципалитет хысна учрежденийĕн "Сăр ен" халăх фольклор ансамблĕн ертÿçине **Юлия Тихоновна ЕРĔМКИНĂНА,** Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи Çатракасси ял тăрăхĕн "Кашмашри информаципе культура центрĕ" муниципалитетăн культура бюджет учрежденийĕн филиалĕн – Çатракасси ял библиотекин – заведующине **Ольга Алексеевна СЕМЕНОВĂНА,** муниципалитетăн "Вăрмар районĕн ял тăрăхĕсен хушшинчи тĕп библиотеки" культура бюджет учрежденийĕн историпе тавра пĕлÿ халăх музейĕн директорне **Василий Егорович ЦЫФАРКИНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"**;

транспорт тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин тĕп хулин – Шупашкар хулин муниципалитет йĕркеленĕвĕн "Шупашкарти троллейбус управленийĕ" муниципалитетăн унитари предприятийĕн троллейбус водительне **Вадим Валентинович ЕФРЕМОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТРАНСПОРТĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"**;

строительство енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн "3-мĕш стройтрест" акционерсен хупă обществин кĕрекен "Спецстрой" тулли мар яваплă обществăн /Канаш хули/ аслă прорабне **Вячеслав Геннадьевич ИПАТЬЕВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ СТРОИТЕЛĔ"** хисеплĕ ят панă.

*Наркомани*

# Ачалăх та «шурă вилĕм» тыткăнĕнче-и?



***Наркомани сарăлнин танлаштаруллă кăтартăвĕсене илес тĕк – Чăваш Ен пирки лăпкă регион теме пулать. Раççейре кашни 100 пин çын пуçне наркомансен шучĕ 232 çынпа танлашать, Атăлçи округĕнче – 245. Пирĕн республикăра вара – 100 çынран кăшт кăна ытларах. Апла пулин те ку лăпланмалли сăлтав мар. Чăваш Енри хуласенче те – Шупашкарта, Çĕмĕрлере, Канашра – «шурă вилĕм» тыткăнне лекнисем чылай. Çавна май ЧР Наркотиксемпе кĕрешекен комиссийĕн Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе кĕçнерни кун иртнĕ ларăвĕнче те самай çивĕч калаçу пулчĕ.***

Кун йĕркине наркотикпе усă куракан ачасемпе çамрăксене тупса палăртас енĕпе мерăсем йышăнассине кĕртни ăнсăртран мар. Унашкаллисем – 400 çын ытла. Шел, çак йыш ÿссе пырать. Тĕлĕнмелле те, ку туртăм хĕр ачасен хушшинче пушшех вăйлă палăрать. Вĕсене вăхăтра тупса палăртни, паллах, вăраха ямасăр пулăшу кÿме кирлĕ. Вице-премьер – сывлăх сыхлавĕн министрĕ Алла Самойлова палăртнă тăрăх – медицина ку енĕпе ĕçлеме хатĕр. Апла пулин те наркотиксемпе усă куракансене тупса палăртас ĕçĕн тĕп пайĕ хальлĕхе çул çитменнисемпе ĕçлекен комиссисен тÿпи.

Шкул ачисемпе студентсене тестласси йăлана кĕрсе пырать. Чăн та, çакă çул çитмен наркомансене тупса палăртнин тĕслĕхĕсене асăнмарĕç – унашкалли пулмантăр. Апла пулин те çак ĕç усси куç кĕрет. Вĕренÿ министрĕ Владимир Иванов хăш-пĕр шкулта хайхи тест ирттернĕ кунсенче ачасем уроксене ятарласа пыманни çинчен каларĕ. Эппин, вĕсем тĕлĕшпе сисчĕвленмелле – ахальтен пăрăнмаççĕ вĕт. Çакнашкал самант та пур: хăш-пĕр вĕренÿ заведенийĕн ертÿçисем хăйсен ачисен хушшинче наркотиксемпе усă куракансем пуррине йышăнасшăн мар. Паллах, хурине шурă пек кăтартас тени ку тĕслĕхре чăннипех хăрушă.

Тĕп хула ертÿçисене те итлерĕç. Мэри шкулсенче ачасене анкета çыртарса анлă ыйтăм йĕркелеме хатĕрленет – çакă тивĕçлĕ информаци пухма пулăшасса шанма пулать. Шупашкарта юлашки вăхăтра психикăна витĕм кÿрекен наркотик йышши хутăшсене сутакан вырăнсене тупса палăртман, вĕсене тĕп тăвас енĕпе çине тăрса ĕçлени усă кÿнĕ. Анчах халь çавнашкал хутăшсене телефонпа шăнкăравласа, Интернет урлă вăрттăн сутасси вăй илнĕ. М.Игнатьев вара хула влаçĕсене каçхи кану учрежденийĕсем тĕлĕшпе тимлĕрех пулма сĕнчĕ. Вĕсен хуçисем хăйсен патĕнче кам мĕн хăтланнине лайăх пĕлеççĕ вĕт. Администрацин çавнашкал клубсен хуçисене витĕм кÿмелли майсем çук тенипе вара килĕшме йывăр: «Вĕсем сирĕн пата тĕрлĕ документ, ирĕк ыйтма пыраççĕ – йĕркене пăснин çакнашкал тĕслĕхĕсене аса илтерни вырăнлă пулмалла».

Наркотикпе минренĕ хыççăн транспорт хатĕрĕсен рулĕ умне ларакансем пирки уйрăм калаçу пулчĕ. Ку енĕпе чăрмавсем çук мар. Ятарлă лабораторире пĕлтĕр пĕтĕмпе 7,3 пин тĕрĕслев ирттернĕ, çав шутра 2,1 пин çынна наркотик тĕлĕшпе тĕрĕсленĕ. Ытларахăшне тĕрĕслеме ПАИ сотрудникĕсем илсе пыраççĕ. Анчах çын хăй тĕрĕсленме килĕшмерĕ тĕк тĕпчев ирттерме май çук иккен. Чăннипе вара лаборатори чылай ытларах тĕрĕслев ирттерме пултарать. Газоанализаторсем наркотиксен пилĕк тĕслĕхне кăна тупса палăртма пултараççĕ. Хроматограф вара çĕнĕ йышши наркотиксене те асăрхать, анчах тĕпчев питĕ хаклă. Акă мĕншĕн А.Самойлова ку енĕпе ПАИ штрафĕсен пĕр пайĕпе усă курни вырăнлă тесе шухăшлать: «Руль умне ÿсĕрле ларнăшăн илекен штрафсем муниципалитетсен бюджетне кĕреççĕ, анчах çав укçан пĕр пусĕ те сиплев учрежденийĕсене каймасть».

Тупăшăн ытти çăл куçĕ тапса тăман чухне штрафсене шанмалли çеç юлать-ши вара? Чăн та, М.Игнатьев апла шухăшламасть. Вăл ку енĕпе бюджетран укçа уйăрмашкăн сĕнÿсем хатĕрлеме хушрĕ. Унсăрăн айăплисемех явап-лăхран пăрăнса юлма пултараççĕ-çке.

Çул çÿрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн управленийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Олег Федоров та çивĕч ыйтăва çĕклерĕ. Пĕлтĕр республикăра пулнă кашни 8 аварирен пĕриншĕн ÿсĕр е наркотиксемпе минренĕ водительсем айăплине çирĕплетнĕ. Транспорт хатĕрĕпе çула ÿсĕрле тухнăшăн 7 пине яхăн çынна явап тыттарнă, наркотиксемшĕн – 56 водителе. Тен, юлашкинчен асăннă йыш пысăкрах та пулатчĕ пуль, анчах çын наркотиксемпе усă курнине тĕпчекен лаборатори республикăра пĕрре кăна – Шупашкарта. Иккĕленÿ çуратнă çыннăн пробисене инçетри районсенчен те кунта илсе килме тивет – вăхăт иртет. Тĕпчев пынă /унăн кăтартăвĕсем уйăхран тин килеççĕ/, ĕçпуçа суд тишкернĕ тапхăрта вара çын машинăпа çав-çавах çÿрет – хăрушлăх куç кĕрет. Акă мĕншĕн Олег Александрович Канашра, Çĕмĕрлере те çавнашкал лабораторисем кирли пирки сăмах пуçарчĕ.

Кирлĕ пуль-ха та – анчах ытла та хаклă-çке. А.Самойлова пĕлтернĕ тăрăх – пĕр хроматограф 25 млн тенкĕ тăрать. Унпа усă курса ирттерекен кашни тĕпчев – 5 пин тенкĕ ытла. Çавна май, Алла Владимировна шухăшĕпе, çĕнĕ лабораторисем валли вăй çитмĕ, биологи пробисене Шупашкара илсе килесси чăрмавлă пулин те – пур пĕр йÿнĕрех. Шупашкарти лаборатори тулли хăватпа ĕçлеменнине /пĕлтĕр пĕтĕмпе те 1,5 пин тĕпчев ирттернĕ, чăннипе вара куллен 200-шер тĕпчев тума пулать/ шута илсен – пушшех. Тĕпчев кăтартăвĕсене уйăхран çеç илни вара министра тĕлĕнтерчĕ: «Тĕпчеççĕ те – кăтартăвĕсем çав кунах хатĕр-çке. Мĕншĕн уйăх кĕтмелле?» Апла тăк кунта ведомствăсен хушшинчи çыхăну çирĕпленменнин сĕмĕ те пур-тăр.

Пĕр сăмахпа, ĕçлемелли пайтах. Çав шутра – общество шухăш-кăмăлне наркомание хирĕç çавăрас енĕпе те. Хальлĕхе халăхра «шурă вилĕм» хăрушлăхне тивĕçлипе хаклани сисĕнмест-ха. Çакна республикăра ятарласа йĕркеленĕ ыйтăмăн ларура палăртнă кăтартăвĕсем те ĕнентереççĕ: респондентсен 11% кăна наркомание чи çивĕч ыйтусен шутне кĕртет. Малта – хваттер тунассипе, шалу пĕчĕккипе, çавнашкал ытти темăпа çыхăннă ыйтусем. Анчах çакна шута илесчĕ: çывăх çын наркотиксен тыткăнне лекрĕ тĕк – ун чух хваттер те, пысăк ĕç укçи те кирлĕ пулмĕ. Кая юлас марччĕ...

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Тĕслĕх*

# Ĕмĕтленме пĕлекенсен çăлтăрĕ çутă

***Кашни çыннăн пурнăçра ырă кăмăл-туйăмпа аса илмелли пулăм пур. Патăрьел районĕнчи социаллă центр ертӳçишĕн Анисия Воробьевăшăн та иртсе кайнă çул асра юлĕ. Хĕрарăм-ертӳçĕ районти «Авангард» хаçат йĕркеленĕ «2013 çул çынни» конкурсра палăрса хисеплĕ ята çĕнсе илчĕ. Сăмах май çакна та палăртмалла: калем ăстисен редколлегийĕ çакнашкал конкурса кăçалхипе вун пĕрмĕш хут йĕркелерĕ.***

**– Анисия Алексеевна, эсир районта çамрăк ертӳçĕ-ача амăшĕсенчен пĕри. Яваплă çак должноçра ĕçлеме пикенни те çулталăк çеç иртрĕ-ха. Апла пулин те вулакансем, район халăхĕ сирĕн ĕçри ăнтăлăвăра, пултарулăхăра хак пама та ĕлкĕрчĕç.**

– Чăн малтанах мана çакăн пек пысăк та хисеплĕ ята çĕнсе илме пулăшнисене чун-чĕререн тав тăватăп. Шанăçа тӳрре кăларма вăй-хăват, сывлăх çеç пултăр. Çакна та палăртасшăн: манпа пĕрле списокра пулнă кандидатсем пурте çак ята тивĕçлĕ. Ĕçре те палăрнă, халăхра та хисеплĕ... Кирек мĕнле çĕнтерӳ те кĕтменлĕхпе çыхăннă. Вăл, паллах, шухăшлаттарать, çĕнĕ ĕмĕт-тĕллев çуратать, хавхалантарать...

**– Вулакан сирĕн çинчен тĕплĕнрен те пĕлес тейĕ: кам хĕрĕ, ăçтан, пурнăçăр еплерех аталанса пынă...**

– Çĕр ĕçченĕн ачисемех эпир. Кивĕ Ахпӳртри хресчен çемйинче çуралса ултсăмăр та тивĕçлĕ воспитани илнĕ. Атте, Алексей Киргизов, Ленин орденĕпе «Гвардеец» хуçалăхĕн паллă тракторисчĕ пулнă. Шел, эпĕ ăна тĕлĕкри евĕр те ас тумастăп, иккĕрех аннен чĕрçи çинче юлнă. Çавăнпа та пурнăçра хурапа шурă черетленсе пынине çамрăклах туйма тиврĕ. Тавах аннемĕре /йывăр тăпри çăмăл пултăр/: пире пĕчченех тĕрĕс воспитани пачĕ, ĕçе хăнăхтарчĕ, тăванлăх туйăмне упрама, ырăпа усала уйăрма, кирлĕ чухне çынна алă тăсса пама вĕрентрĕ. Çынра çак ырă енсем пулсан, манăн шухăшăмпа вăл нихăçан та хур курмасть.

**– Çулăрпа çамрăк пулин те ку таранччен эсир Туçари культура çуртĕнче те, тĕслĕх библиотекăра ĕçленине те пĕлетĕп, ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕнче тăрăшнине те ас тăватăп. Халĕ акă районти халăхăн социаллă ыйтăвĕсемпе ĕçлетĕр.**

– Ĕмĕтпе пурăнаканăн çăлтăрĕ те ыттисенчен çутăрах, – тенĕ ватăсем. Кирек хăш ĕçе те кăмăлтан, юратса, тĕплĕн тума ăнтăлни ку таранччен манăн утас çула уçса пычĕ пулинех. Пурнăçра айккинчен сăнаса тăма юратмастăп, хам хутшăнма тăрăшатăп. Çакă вара çыннăн чи лайăх енĕсене туптама пулăшать.

**– Çын кăмăлĕ калаçуран курăнать. Илемпе çеç мар, эсир хăвăрăн ырă кăмăлăрпа, ăшăлăхпа, çепĕç чĕлхĕрпе хăвăр пата туртатăр.**

– Ку вăл юратнă аннемĕрĕн «çимĕçĕ». Чĕлхе темĕнле пысăк çыннăн кăмăлне те хуçма пултарать. Çавăнпа та хамăн пурнăçра эпĕ никама та кӳрентерме, усал сăмах калама тăрăшмастăп.



*● Районти социаллă тивĕçтерӳ центрĕн директорĕ А. Воробьева Красномайскинчи ача амăшне Р. Сироткинăна йышăнать.*

**– Хăвăрăн çеç мар, коллективăн та ырă кăмăл туйăмĕ пысăк. Сирĕн коллектив кашни ыр кăмăллăх акцийех хастар хутшăнать.**

– Чăнах та, Турханта тата Ксыл Чишмара ватă çынсемпе инвалидсене вăхăтлăха пурăнма усăнă уйрăмсене пĕрлештерекен центр ĕçченĕсем хăйсен ĕçне чунтан тата тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пынисĕр пуçне пурнăçри йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ кирек мĕнле çынна та алă тăсса пама хатĕр. Çулсеренех йĕркеленекен «Ачалăхшăн, ачасемшĕн» марафона районта чăн малтан укçа куçарса пама тăрăшатпăр. Кăçал та çаплах пулчĕ. Ку таранччен ятарлă счет çине икĕ хутчен те укçа хутăмăр. Иртнĕ çул Хабаровск крайĕнче шыв илнипе шар курнисен инкекне чĕре сывăхне илсе пуçарулăх кăтартнăччĕ. Çак кунсенче хута кайнă Патăрьелĕнчи Турă Амăшĕн турăшĕ ячĕллĕ чиркĕве те пĕр кунхи ĕç укçине куçартăмăр. Йывăрлăх вăл пĕрле пулсан çеç çăмăлланать, хуйхă вара пĕчĕкленет.

**– Анисия Алексеевна, кирек мĕнле тĕп ĕç те общество пурнăçне хастар хутшăнсан çеç туллин курăнать пек. Кун пирки эсир мĕнле шухăшлатăр?**

– Тĕрĕсех. Шкулта, суту-илӳ, культура училищисенче, университетра вĕреннĕ чухне те эпĕ тăтăшах общество ĕçне хутшăннă. Библиотекарь чухне те ялта ал ĕç кружокĕ йĕркеленĕ. Нумай çул хĕрарăмсен канашĕн председателĕ пулнă, кашни уява ял çыннисемпе пĕрле ирттерме тăрăшнă, спорт е культура мероприятийĕ йĕркеленĕ. Сăмах май, тăваттăмĕш çул эпĕ «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин районти политканаш членĕ. Районта иртекен кашни мероприятиех май пур таран хутшăнма тăрăшатăп. Хальхи вăхăтра пирĕн центр пăхăнса тăракан министерство республикăри социаллă учрежденисен ертӳçисен хушшинче тăтăшах спартакиада йĕркелет. Унта та ку таранччен Патăрьелсен чысне яманччĕ-ха...

**– «Çулталăк çынни» пушă вăхăта еплерех йĕркелет-ши?**

– Ял çыннин вăл чылайăшĕн пĕрешкел-тĕр: çулла пахча ĕçĕ, выльăх-чĕрлĕх, тирпей-илем... Мĕн пур ĕçрен ирĕклĕ вăхăт тупăнсан вара историпе çыхăннă кĕнеке вулама кăмăллатăп.

**– Апла эсир çамрăк чухне истори учителĕ пулма ĕмĕтленнĕ-тĕр?**

– Пачах çук. Сцена ăсти, артист пулма хирĕç марччĕ. Шăпа тени урăх çула суйласа илчĕ. Икĕ хĕрĕм те хам пекех юрлама кăмăллаççĕ: чăвашла та, вырăсла та, ют чĕлхепе те. Ленăпа Шура аслă шкулта вĕренеççĕ: пĕри – медицина, тепри ют чĕлхе факультетĕнче.

**– Юратнă тĕс, кăмăлланă çимĕç мĕнли-ши?**

– Шурă çине пĕр пăнчă хура лексен те курăнать. Ялан тирпейлĕ пуласчĕ. Шăрттан хатĕрлеме кăмăллатăп. Паллах, çиме те.

**– Тавах уçă калаçушăн, малашнехи ĕçре ăнăçу çеç сунатăп.**

■ **Альбина ЕГОРОВА калаçнă.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

*Аталану çулĕпе*

# Тивĕçе чыслă пурнăçланă

***Канаш районĕнчи патшалăх ветеринари службинче 59 çын вăй хурать: 26-шĕ – аслă, 21-шĕ ятарлă вăтам пĕлӳллĕ. Тата 12-шĕ – техперсоналпа бухгалтерсем. Унсăр пуçне виçĕ хуçалăхăн производство ветслужби пур, вĕсенче – 6 специалист. Патшалăх ветслужбин тытăмне ветстанципе пĕрле 3 лечебница, 14 участок, 1 ветпункт, экспертизăн 3 лабораторийĕ тата 1 ветаптека кĕреççĕ. Туслă коллектива Михаил Кошкин ертсе пырать.***

– Пирĕн тĕллев – тивĕçе чыслă пурнăçласси, – тет Михаил Борисович. – Сикекен чир-чĕре сарăлма парас марччĕ, вĕсене район территорине кĕресрен тимлĕ сыхласчĕ, тупса палăртсан вăраха ямасăр сиплесчĕ. Сĕтел çинче яланах лайăх тĕрĕсленĕ, этем пурнăçĕшĕн хăрушă мар апат-çимĕç пултăр тетпĕр. Тĕрлĕ тытăмри пур хуçалăхра та выльăх-чĕрлĕх йышне, уйрăмах сăвакан ĕнесен кĕтĕвне, сыхласа-упраса хăварассишĕн çине тăратпăр.

Учреждени администрацийĕ ĕçтешĕсен ăсталăх шайне çуллен ӳстерме тăрăшать. Пĕлтĕр 45-шĕ ятарлă курссенче хăйсен пĕлĕвне тарăнлатнă. Ветврачсене пурне те компьютерпа тивĕçтернĕ, халĕ вĕсем Интернет усăлăхне хăюллăнах кĕреççĕ.

Ветспециалистсем 2013 çулта палăртнă тĕллевсене пурне те чыслă пурнăçланă. Профилактика мероприятийĕсене вăхăтра ирттернĕрен ялсенче те, хуçалăхсенче те ерекен чирсене сарăлма паман. Туберкулез, бруцеллез, лептоспироз, чума, ыттипе те – лару-тăру йĕркеллех. Лейкозпа çине тăрса кĕрешнĕрен 2003-2013 çулсенче чирлĕ ĕне выльăх йышĕ 5,9-тан 0,1 процента çити чакнă.

Канаш хулипе районĕнче выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк продукцине технологине çирĕп пăхăнса тирпейлес тата упрас ĕçе тĕрĕслесе тăма ветеринари-санитари экспертизин 65 подразделенине туса хунă.

Пĕлтĕр хулапа районта ятарласа йĕркеленĕ 18 бригада хуçасăр 681 йытăпа 112 кушака «сывратса» янă, 68 тилле персе пăрахнă. Тытнă кашни чее чĕр чуншăн сунарçăсене 300 тенкĕ парса хавхалантарнă.

Выльăх чирлесси апат пахалăхĕнчен те нумай килет. Ветеринарсем çавăнпа утă типĕтнĕ, сенаж, силос хывнă çĕре çитсе хатĕрлес технологие епле пăхăннине çирĕп тĕрĕслеççĕ. Хуçалăх ертӳçисене асра тытма çырнине валеçсе параççĕ. Хĕл каçарма хатĕрленĕ утăпа сенажа 100 процентчĕпех, силоса 52% тĕрĕсленĕ. 1-2 класлă утă – 67, силос – 61,5, сенаж – 49,9% çеç. Пĕрин те пахалăхĕ туллин тивĕçтермест. 2013 çулта 2776 ĕне выльăх ӳпке, вархырăм чирĕпе аптранă. Ферма ĕçченĕсем апатлантарас йĕркене, ĕç дисциплинине час-часах пăснă. Сĕте йăлтах суса пĕтермесен те, сумалли аппаратра çиллине вăрах тытсан та ĕне чирлет.

Тӳрĕ кăмăлпа тата тăрăшса вăй хунăшăн пĕлтĕр 11 специалист наградăсене тивĕçнĕ. Пуçлăх çумĕ Надежда Андреева, Ăнтавăшри, Усырмари, Аччари ветучасток ертӳçисем Александр Прокопьев, Тамара Гаврилова, Валерий Семенов Раççей Ял хуçалăх министерствин Тав хутне илнĕ. Кăшнаруйри ветпункт ертӳçипе Аччари ветучасток ветфельдшерне Валентина Якимовăпа Людмила Семеновăна – ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп хутне, станци ветврачĕпе Сиккассинчи ветучасток ертӳçине Елена Клементьевăпа Елена Сергеевăна тата Светлана Тарасова тĕп бухгалтера ЧР патшалăх ветслужбин Тав хутне панă. Ямашри ветлечебница ертӳçипе Шăхасанти ветлечебница ветврачĕ Наталия Пугановăпа Надежда Андреева Канаш район администрацийĕн Хисеп хучĕллĕ пулнă.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**



*● Варринче – Михаил Кошкин.*

## Библиотекăра – ача-пăча пӳлĕмĕ

***Чăваш Республикин Наци библиотекинче ача-пăча валли «Интеллектуариум» пӳлĕм уçăлнă.***

Йĕркелӳçисем – Чăваш Ен çамрăкĕсен ыр кăмăллăх пĕрлешĕвĕн ертӳçисем Михаилпа Галина Быковсем. 2013 çулта социаллă проекта пурнăçа кĕртме вĕсене патшалăх пулăшу кӳнĕ. Хăйне евĕр пӳлĕме хальхи вăхăтри сĕтел-пуканпа, экологи тĕлĕшĕнчен таса теттесемпе, пултарулăха аталантармалли материалсемпе, кĕнекесемпе пуянлатнă.

Ача-пăча пӳлĕмне ашшĕ-амăшĕпе вĕсен пепкисем тӳлевсĕр çӳреç. Аслисем кунти мĕн пур япалапа усă курса пĕчĕккисене 45 минут хушши выляттарма-вĕрентме пултарĕç. Занятисене пултаруллă педагогсемпе ăсчахсене, тĕрлĕ професси представителĕсене хутшăнтарма палăртаççĕ. Пӳлĕм çынсене ытлари кунран пуçласа шăмат кунччен 10-16 сехетсенче йышăнать.

**Влада МИРСКАЯ.**

## Трак ен пикине палăртрĕç

***Красноармейскинчи ял тăрăхĕсен хушшинчи информаципе культура центрĕнче иртнĕ «Трак ен пики-2014» конкурса 8 чипер хутшăнчĕ.***

Вĕсем хăйсемпе паллаштарас, чăваш йăли-йĕркине, историйĕпе культурине пĕлес, пултарулăхне кăтартас, наци апат-çимĕçĕ хатĕрлес, чăваш тумне палăртас енĕпе тупăшрĕç. «Трак ен пики-2014» ята Трак вăтам шкулĕнчи 10-мĕш класра вĕренекен Мария Козлова тивĕçрĕ. Вице-пике – Анна Васильева /Упи/. Ыттисене тĕрлĕ номинацире палăртрĕç. Пурне те парнесемпе чысларĕç.

Маттур пикесене район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Шестаков тата хĕрарăмсен районти канашĕн ертӳçи Зинаида Петрова ăшшăн саламласа ырă сунчĕç.

**Виктор ДАНИЛОВ.**

Сывлăх сыхлавĕ

# «Аллу çăмăл санăн тетчĕç...»

**_Çынсем çут тĕнчерен уйрăлнин сăлтавĕсен йышĕнче юн çаврăнăш тытăмĕн чирĕ малта тăрать, унтан, çул-йĕр аварийĕпе çыхăннă вилĕм пысăкланнипе, – тулашри инкек-синкек, виççĕмĕш вырăнта – усал шыçă. Онкологипе вилессин пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ – 2,1, çав шутра усал шыçăллă çĕнĕ йĕркеленӳсемпе 1,6 процент чакнă пулин те ку амакпа нушаланакансен хисепĕ республикăра ӳссе пынине, çакă чи малтанах ăна тупса палăртмалли диагностика никĕсĕ çĕнелнипе тата аслă ăру çыннисем нумайланнипе çыхăннине палăртнăччĕ ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин коллегийĕн анлă ларăвĕсенчен пĕринче Алла Самойлова министр. Юлашки çулсенче ку амакпа вирлĕн кĕрешеççĕ. Тĕп хуламăрăн Гладков урамĕнчи медицинăн пысăк технологийĕпе тивĕçтерекен хальхи йышши диспансерĕ çĕр-çĕр пациента хăрушă инкекрен хăтарма пулăшниех çакна аван çирĕплетет._**

**_Усал шыççа çăварлăхлас енĕпе тунă çитĕнӳсенче, паллах, Валентин Кузьминăн тӳпи те сумлă. Халĕ кунта усă куракан сиплев аппаратури пирки çамрăк онкологсем 43 çул каялла ĕмĕтленме пултарнă кăна. Çеçпĕл Мишши урамĕнче вырнаçнă учреждени çурчĕ те кивĕ пулнă. Пултарулăхĕпе пуçарулăхне кура диспансерăн тĕп врачне уйăрса лартнăскер больницăн пурлăх никĕсне çирĕплетессишĕн нумай тăрăшнă вăл. Диспансер валли икĕ корпус çĕкленĕ. Пациентсене сиплеме, кадрсен ăсталăхне ӳстерме тивĕçлĕ услови туса хунă…_**

**_Калас сăмахăм – республикăри паллă онколог Валентин Кузьмин çинчен. Медицина наукисен кандидачĕ, ЧАССР тава тивĕçлĕ врачĕ ыран 80 çулхи юбилейне паллă тăвать._**



### Ашшĕ пилленипе

Элĕк районĕнчи Ураскилтре йышлă хресчен çемийине çут тĕнчене килнĕскер Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă çул ялти шкулăн пĕрремĕш класне кайнă. Çичĕ çултан Элĕкре вăтам шкула куçнă. Каччă аттестат илнĕ хыççăн çар летчикĕ пулма ĕмĕтленнĕ. Ашшĕ, Иван Кузьмич, граждан, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçисен вут-çулăмĕ витĕр тухнăскер, иккĕмĕш ушкăн инваличĕ пулса тăнăскер, тухтăрсене питĕ хисепленĕ. Сăлтавсăр мар: йывăр суранланнипе госпитальте çур çул сипленме тивнĕ унăн. Çав сăлтавпах ывăлне хирурга вĕрентмешкĕн тĕв тунă. Валентин унăн сăмахĕнчен иртеймен: фронтран I степень Тăван çĕр-шыв вăрçин орденĕпе, I степень Мухтав орденĕпе, кăкăр тулли медальпе таврăннă, хастар салтак ывăлĕшĕн ырă тĕслĕх шутланнă. Амăшĕ те Пелагея Афанасьевна мăшăрĕн шухăшне ырланă.

1951 çулта вăтам шкул пĕтернĕ Валентин Хусан медицина институтĕн сиплев факультетне кĕнĕ. Тăрăшса вĕреннĕ, пултаруллă студент шутланнă. Вăл пуçарнипе топографи анатомийĕн тата операци хирургийĕн кафедри çумĕнче ăслăлăх кружокĕ йĕркеленнĕ: йытăсемпе кушаксене, шапасене сăнав операцийĕсем туса çамрăксем ăсталăха ӳстернĕ.

Ултă çултан аслă шкула хĕрлĕ дипломпа пĕтерсе Чăваш хутлăхне таврăннă çамрăка ЧАССР сывлăх сыхлавĕн министрĕ Вера Ефимова Шупашкарти больницăсенчен пĕринче хирург пулма сĕннĕ. Валентин Иванович ялти учрежденире сиплес тĕллевлĕ пулнине пĕлтернĕ.

Кăмăлне шута илсе ăна республикăн Кăнтăр районĕсенчен пĕринчи сыватмăша суйлама сĕннĕ. Килĕшнĕ. Патăрьел районĕн тĕп больницинче тухтăрсем ситменнипе уролог та, нейрохирург та, травматолог та, анестезиолог та, паталог-анатом та пулма тивнĕ унăн. «Эпĕ çамрăк пулнă, мал ĕмĕтпе пурăннă. Операцисем ăнăçлă вĕçленетчĕç, пациентсем кĕске хушăрах уралланни, вăй илни хавхалантаратчĕ. Аллу çăмăл санăн тетчĕç ĕçтешсем», – аса илет ветеран.

Кунтах вăл çемье телейне тупнă – Луиза Николаевна педиатрпа пĕрлешсе икĕ ывăла пурнăç парнеленĕ. Владимирпа Сергей халĕ – ăста специалистсем. Асли И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн радиотехника тата экономика факультечĕсенчен вĕренсе тухнă, Владимир хулин тĕп предприятийĕсенчен пĕринче экономиста ĕçлет. Тепри – химик, Мускавра Раççей-Швеци фирминче тăрăшать. Мăнукĕ Анастасия Сергеевна Мускав патшалăх университетĕнче химик специальноçне алла илнĕ, медицина институтĕнче вĕрентет, пулас сиплевçĕсене ăс парать.

### Тĕп тухтăр

Ĕçе йĕркелесе пыма пултарнипе квалификацине хакласа ЧАССР Сывлăх сыхлавĕн министерстви 1966 çулта Валентин Кузьмина республикăри онкологи диспансерĕн тĕп тухтăрĕн должноçне тата министерствăн штатра тăман тĕп онкологĕн тивĕçне пурнăçламашкăн сĕннĕ.

Вăл кăткăс операцисем тунă, практика ĕçне ăслăлăхпа çыхăнтарнă: 1971 çулта «Кăкăр парĕн шыççин комплекслă диагностики тата сиплевĕ» темăпа диссертаци хӳтĕлесе медицина наукин кандидачĕн ятне илнĕ. Ăслăлăх ĕçĕсем 120 ытла унăн, çав шутра – 9 кĕнеке. Статйисене çĕр-шывра кăна мар, чикĕ леш енче те пичетленĕ.

1972 çулта Валентин Кузьмин И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн медицина факультечĕн госпиталь хирургийĕн кафедрин ассистенчĕ /каярахпа – доцент/ пулса тăнă тата çав вăхăтрах диспансера ертсе пынă, штатра тăман онколог тивĕçне пурнăçланă.

Пурнăç урапи кал-кал та пĕр тикĕс шунă. Пурте йĕркеллĕ темелле: ывăлĕсем çитĕннĕ, ĕçпуç тивĕçтернĕ. Валентин Иванович аслă шкулта онкологи курсне ертсе пынă, Луиза Николаевна медицина училищинче педиатри вĕрентнĕ...

Кĕтмен çĕртен йывăр инкек йăтăнса аннă: 1986 çулхи Çĕнĕ çул уявĕ умĕн амăшĕ куçне яланлăхах хупни çинчен хыпар çитнĕ. Валентин Иванович тăван ялне васканă. Кăрлачăн 2-мĕшĕнче Пелагея Афанасьевнăна юлашки çула ăсатнă. Çывăх çыннин вил тăприйĕ çинчи хĕресе тӳрлетекен арçынна чупса çитнĕ кӳршĕ телеграмма тыттарнă. «Кăмăлна хытар, Валентин. Паян, кăрлачăн 2-мĕшĕнче, операци хыççăн тăна кĕреймесĕр Луиза вилни пирки хурланса пĕлтеретпĕр», – тенине вуласа та пĕтереймен – «хура» хут аллинчен тухса ӳкнĕ...

Амăшĕн вил тăприйĕпе юнашар шăтăк чавма ыйтнă вăл. Хăй вара Шупашкара çул тытнă. Савнă çынни вилнĕ тенине ĕненес килмен. Анчах пурнăç чăнлăхĕнчен иртеймĕн...

Вăхăтăн – хăйĕн чуппи, ăна тытса чарайăн. Валентин Иванович çав кунсене паян та хумханмасăр аса илеймест. Йывăр вăхăтра арăмĕне юнашар пулайманшăн чунĕ халĕ те ыратать. Хăй ăста та пысăк квалификациллĕ хирург шутланнă май аван ăнланать: хырăмлăхăн перфорацивлă шыççинчен Луиза Николаевнăна çăлса хăварма май пулнах.

1988 çулта республикăн сывлăх сыхлавĕн министрĕ Николай Григорьев Валентин Кузьмина тĕп хирург должноçне сĕннĕ. Пуçĕпех ĕçе кӳлĕннĕ вара: Чăваш Енĕн хирурги службине /уйрăмах пӳрсуран чирĕпе нушаланакансене, аманнисене васкавлă пулăшу парассине/ çĕнетсе улăштармашкăн хутшăннă, район больницисене çӳресе çамрăк специалистсене хирурги енĕпе кăна мар, йĕркелӳпе методика ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе те пулăшнă.

70 çул тултаричченех тăван халăх сывлăхне упрассишĕн тăрăшнă Валентин Иванович. Халĕ тивĕçлĕ канура ĕнтĕ. Ачисен – хăйсен çемйисем.

Валентин Кузьмин общество ĕçĕнче те пуçаруллă: Пĕтĕм Союзри онкологсен обществин правленийĕн, Чăваш Ен хирургĕсен ассоциацийĕн правленийĕн членĕ пулнă.

Ĕçри çитĕнĕвĕсемшĕн «Хисеп Палли» орденпа, Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп хучĕпе наградăланă, «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ» хисеплĕ ят панă, вăл – СССР сывлăх сыхлавĕн отличникĕ, СССР санитарипе оборона отличникĕ.

...80 çулхи юбилейпа Валентин Ивановича чăваш халăх хаçачĕ – менелник хуçи ăна юратнă кăларăм тесе хаклать – ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул сунать.

■ **Валентина СМИРНОВА**

Сунар

# Йăнăш турĕç – такăнтарчĕç

**_Монополипе кĕрешекен служба виçĕ çул каялла республикăри сунар лаптăкĕсене арендаторсене саккуна пăсса валеçнĕ тесе пĕтĕмлетнĕ. ЧР Сунарçăсемпе пулăççен патшалăх служби вĕсемпе çирĕплетнĕ килĕшӳсене таттарас тĕллевпе ЧР Арбитраж судне тавăç тăратнă. Вăл чылайăшне, çав шутра Куславкка районĕнчи сунарçăсемпе пулăççен пĕрлĕхĕн ертӳçи Юрий ЗАБРАЕВ алă пуснине, пăрахăçланă._**

– Эпир пĕр саккуна та пăсман, – терĕ Юрий Александрович. – Ăна 2009 çулта Сунарçăсемпе пулăççен патшалăх служби пăхăнман: районти сунар вырăнне тара парассине маларах республикăн информаци хатĕрĕ урлă пĕлтермен. Вăл йăнăшне пула пĕрлĕх шар курчĕ. Хытă тарăхрăмăр. ЧР Арбитраж сучĕн йышăнăвĕпе килĕшмерĕмĕр, Чул хулари, Владимирти, Мускаври судсене тавăç тăратрăмăр. Шупашкарсен йышăнăвне вĕсем те пăрахăçламарĕç. Пĕлтĕрхи çурла уйăхĕнче пĕрлĕх егерĕсем куллен сыхланă 46,6 пин гектар лаптăка пĕр çын пăхса тăракан, кашни кайăкçă усă курма пултаракан территорие куçарчĕç.

**– Çур çулта унта мĕнле улшăну пулчĕ?**

– Пирĕн суд ларăвĕсем – 1,8, кӳршĕсен 1-2 çула тăсăлчĕç. Тăватă-пилĕк лаптăка туртса илсен арендаторсем сунар хуçалăхне аталантарассишĕн инвестици хывма, вунăшне салатсан чĕр чун йышне ӳстерессипирки шухăшлама пăрахрĕç. Сĕнтĕрвăрри арендаторĕсене пирĕнтен малтан лаптăксăр хăварчĕç – йĕрке пĕтрĕ. Унта çĕр-çĕр сунарçă кумрĕ: чĕр чун юлмарĕ. Вăрмар районĕнче юлашки хир сыснине персе вĕлернĕ.

**– 2012 çул вĕçĕнче ăна 43 пуçа çитертĕмĕр тенĕччĕ. Малтан вăл мĕн чухлĕ пулнă тата халĕ миçе?**

– Сунар вырăнне пĕрлĕхе париччен, 2009 çулта, 5-6 пуç çеçчĕ. Лаптăк хуçи республикăн Сунарçăсемпе пулăççен пĕрлĕхĕччĕ. Лайăх пăхрăмăр, браконьерсенчен хӳтĕлерĕмĕр – кĕтӳ хăвайт пысăкланчĕ. Халĕ 15 пуç кăна.

**– Мĕншĕн нумай хухнă?**

– Служба иртнĕ сунар тапхăрĕнче тăватă лицензи панине пĕлетĕп. Виççĕшне усă курнă, пĕрне каялла тавăрнă. Эпир кĕтĕве хӳтĕлеме кайман. Пĕтĕм республикăран килнĕ вун-вун акарçă вăрманта, уй-хирте çӳрерĕ. Вĕсен лицензи, сунар удостоверенийĕ пулнă-ши? Пĕлместĕп. Манăн та, пĕрлĕх егерĕсен те документ тĕрĕслеме ирĕк çук. Сунарлăхра икĕ сысна юлашкине асăрхарăмăр.

**– Йĕрке тума республикăн Сунарçăсемпе пулăççен патшалăх службин Вăрмарпа Куславкка районĕсенчи инспекторĕ вырăнтах-çке.**

– Çапла. Анчах: «Куç курать те – шăл витмест», – теççĕ. Сунарçăсем, тен, лицензисĕрех хăвăрт чупакан юр ашансемпе çил-тăман кăларса çӳреççĕ. Çур çулта лаптăкра саккуна пăсакансене тăрă шыв çине кăларассишĕн пĕр рейд та ирттермен. Эпир çуллен темиçе йĕркеленĕ, унта полицие пĕрлĕх егерĕсене явăçтарнă, протокол çырнă. Хам та чăтлăха çитсе



тĕрĕсленĕ. Инспектор икĕ районти чĕр чун пурăнакан вырăна куллен çитсе çаврăнаймасть. Браконьерсенчен нумайăшĕ ăна асăрхасанах куçран çухалать. Инспектор хăваласа тытаймасть. Вăл чи кирлĕ ĕç хатĕрĕсĕр – юр ашансăр. Çăмăл автомашинин пур-ха. Унпа çĕр типсен кăна вăрмана, улăх-çарана кĕрет. Пĕрлĕх хăнасене сысна тыттарса юр ашан туянмалăх укçа ĕçлесе илчĕ. Хĕлле вăл лаптăка кĕнĕ пăшаллă çынсен документчĕсене тĕрĕслеме пулăшрĕ. Пирĕн кашни егерь – çăмăл автомашиналлă. Кĕскен, эпир чĕрлĕхе инспектортан нумай лайăххăх хӳтĕленĕ.

**– Сысна кĕтĕвне мĕнле пысăклатрăр?**

– Усланкăра апатлăх вырăн турăмăр, юпасем лартса тăррине витрĕмĕр. Юр ашан туяниччен хĕлле вăрмана тырă кутамккапа вун-вун центнер çитертĕмĕр. Кашни эрнере пĕрре сапса патăмăр. Тăрантакана часах хăнăхрĕ, апатпа пырасса кĕтсех тăчĕç. Вун сакăр çăвăр хĕл каçрĕ. Пысăк хуçалăх ун пеккине кĕр куннех тыттарса укçа тăвать. Тепĕр çул вăрман уççинче сĕлĕ акрăмăр. Сыснасем хĕл каçма вăй пухрĕç. Вăрмана юр тултарсан çĕр-çĕр мăшăр çăка милĕкĕ çыхса патăмăр. Техĕмлĕ-сĕтеклĕскерне пăши, сысна, мулкач питĕ килĕштерчĕ. Вĕсене – суланчапа, ăсана, хир чăххине хăйăр тата вĕт чул хутăшĕпе савăнтартăмăр.

**– Пĕрлĕх тĕллевĕ мĕнлерехчĕ?**

– Сысна йышне ӳстерсе, ăна укçалла тыттарса тупăш ытларах илессиччĕ. Киленкаян валли вăрманта пӳрт лартасшăнччĕ, унта мунча, çăвăнса тасалмалли, канмалли пӳлĕмсем тăвасшăнччĕ. Пĕвене темиçе пин лăкă /вĕт пулă/ ятăмăр. Апатлантарса çитĕнтерсен укçалла тыттарăпăр теннĕччĕ. Шел, ĕмĕте татрĕç.

**– Служба аукцион ирттерсе туртса илнĕ сунар вырăнĕсене тепĕр хут валеçме палăртнă. Районти лаптăка каллех алла илес тĕллевпе унта Куславккасем хутшăнĕç-и?**

– Ăна Мускаври е Хусанти бизнесмена партарас килмест. Вăл ярса илсен вырăнти сунарçăсемшĕн çул хупăнĕ. Пире Мускав е Хусан хакĕпе лицензи сĕнĕç – туянаймăпăр. Вĕсенчен пуянсем килме тытăнĕç. Кам укçа нумайрах хывать – çав çĕнтерет. Çакна пĕлетпĕр пулин те аукциона хутшăнатпăрах.

**– Çухату тӳснĕ арендаторсем пурте кăмăлсăр. Хуçалăхсене аталантарма укçа чылай хывреç-çке. Вĕсене тăкак кăтартмасăр йăнăша тӳрлетме çукчĕ-ши?**

– Килĕшӳсене татиччен сунар лаптăкĕсене виççе, тĕпчесе пахаламалла, ку ĕçе пурнăçланине çирĕплетекен документсем хатĕрлемелле, вĕсене Мускавпа килĕштермелле пулнă. Лаптăксем нумай вăхăтлăха хуçасăр ан юлччăр тесе çакăн хыççăн тин аукцион ирттермеллеччĕ, вĕсене кивĕ арендаторсенчен илсе çĕннисене кĕске хушăра валеçмеллеччĕ. Çак тапхăр вăраха тăсăлчĕ – сунар хуçалăхĕсемпе объекчĕсене пысăк сиен кӳчĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**



# ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

Ятарлă кăларăм

## Тивĕçлисене – Мухтав палли

***Вырăнти хăй тытăмлăхăн паянхи обществăри пĕлтерĕшĕпе витĕмне кашниех туйса тăрать. Çавăнпа пĕрлех вăл паян граждан обществин пурнăçне йĕркелесе пымалли тĕп форма, апла тăк – влаç вăй-хăвачĕн шайĕ тата рынок тапхăрĕнчи экономика тытăмĕн элеменчĕ те.***

Кăçалхи юпа уйăхĕнче Раççейĕн «Вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» саккунне йышăннăранпа 12 çул çитет. Халĕ ĕнтĕ иртнĕ тапхăрти ĕçе пĕтĕмлетсе вырăнти хăй тытăмлăх çинчен кăларнă саккунлăх тулли хăватпа ĕçленине, унăн экономикăпа финанс никĕсне хывнине, муниципалитет йĕркеленĕвĕсем хăйсен общество-политика ĕçĕнче пуян опыт пухнине палăртма пулать. Унăн аялти звени те – ял тăрăхĕсем, поселок-хула округĕсем, район администрацийĕсем – территорири халăхăн пурнăçне тулли йĕркелесе пымалли, унăн çивĕч ыйтăвĕсене татса памалли функцисене алла илнĕ. Асăннă тулли праваллă институт хăйĕн тĕллевĕсене пурнăçлать, малалла аталанать, çĕнелет.

Çулталăк каялла иртнĕ Чăваш Республикин муниципалитет йĕркеленĕвĕсен Канашĕн 5-мĕш съездĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев вырăнти хăй тытăмлăх органĕ обществăпа политикăри хăйĕн чăн вырăнне тупнине, хăватлă вăй пулса тăнине кăмăллăн палăртрĕ. «Çак институтăн пĕлтерĕшне тата çӳллĕрех шая çĕклес тĕллевпе Раççей Президенчĕ Владимир Путин пирĕн професси уявне – Вырăнти хăй тытăмлăх кунне – кашни çулах ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче паллă тума йышăнчĕ. Обществăри тăнăçлăх нумай чухне хула тата район администрацийĕсен тухăçлă ĕçĕнчен килнине самантлăха та манас марччĕ. Вырăнти влаçăн вун-вун тĕрлĕ ыйту татса пама тивет, унта пурăнакансен вырăнти нумай енлĕ социаллă пурнăçне йĕркелесе тăмалла. Манăн шухăшăмпа, çапла тăвать. Çак тытăмра тăрăшса вăй хуракансене, пуçарullă пуçлăхсене, нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекенсене хастарлăхшăн, пултарулăхшăн тав тăватăп», – терĕ Михаил Васильевич. Ун чухнех вăл «Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн» Мухтав паллине çирĕплетни çинчен пĕлтернĕччĕ.

Каярахпа асăннă наградăна хатĕрлесе çитересси вăраха кайрĕ. «Пĕлтĕрхи юпа уйăхĕ тĕлне документсем пĕтĕмĕшле хатĕрччĕ, анчах шăпах вăл вăхăтра федераци шайĕнче 25 саккун йышăнчĕç, чылайăшне – вĕренӳ, культура, сывлăх сиплевĕ – улшăнусем кĕртрĕç. Çавăнпа васкас темерĕмĕр, раштавра пĕтĕмпех йĕркене кĕртсе çитертĕмĕр», – вăраха кайнин сăлтавне уçăмлатрĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов. ЧР муниципалитет йĕркеленĕвĕсен Канашĕн правленийĕ те вăхăта ахаль ирттермен: ăна тĕплĕ сӳтсе явнă, пур ертӳçĕ те хăйĕн шухăшне пĕлтернĕ, сĕнӳ панă. Тавлаштараканни асăннă наградăна тивĕçлисен йышне çак тытăмра миçе çул тăрăшнисене кĕртесси пулнă. Юлашкинчен «10 çулпа» килĕшнĕ: пуçлăхсен шухăшĕпе, çакă та вĕсемшĕн питĕ нумай – «эпир влаç тытăмĕнче ун чухлĕ ĕçлейместпĕр...»

Сăмах май, Мухтав палли пуçлăхсен награди мар, ăна влаç тытăмĕнче çак вăхăтран кая мар ĕçленĕ специалист тивĕçме пултарать. Награда статусĕпе килĕшӳллĕн Мухтав паллипе пĕр хут кăна чысласçĕ.

Награда эскизĕпе Положенине Чăваш Ен парламенчĕн депутачĕсем кĕçех сессире çирĕплетĕç. Мухтав палли çавра формăллă пулĕ, латуньрен хатĕрлĕç, кĕмĕл тĕспе витĕç. Сăнĕ енче – варринчен тухакан пайăркасем çинче Чăваш Енĕн патшалăх ялавĕн рельефлă сăнне вырнаçтарнă, çӳлти пайĕнче – чăваш наци тĕрри, аялта – тулă пучахĕсем.

■ **Юрий ПЕТРОВ**

## Кун йĕркинче – çĕр ыйтăвĕ

***Чăваш хресченĕ çĕртен илекен тухăç ăна юратнинчен тата пулăхлатса пынинчен килнине тахçанах пĕлнĕ. Шел, пĕр тапхăр çак ăнлав хăйĕн пĕлтерĕшне çухатма тытăннăччĕ. Юрать, тĕрĕс мар утăм тунине вăхăтра ăнланса илчĕ çĕр ĕçченĕ: пусă çаврăнăшĕнчен тухнă, çум курăк айне пулса юлнă çĕрпе каллех хăйĕн ырлăхĕшĕн усă курас тĕллевпе пурăнать.***

Шупашкар районĕн ертӳçисем, унăн çĕрĕсем икĕ хула тавра вырнаçнине шута илсе, кашни тăваткал метр усă патăр тесе тăрăшаççĕ. Пуш уйăхĕн малтанхи кунĕсенче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе ирттернĕ канашлăвăн кун йĕркине усăсăр выртакан çĕрсен инвентаризацийĕн ыйтăвне мала кăларнă. Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – экономика, пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçи З.Маслова инвентаризацин мероприятийĕсемпе тĕплĕ паллаштарнă. Ăна ял тăрăхĕсенчи хуçасăр пай çĕрĕсене харпăрлăха куçарассипе пĕрле туса пырĕç. Районти çĕр пайĕсен 70 проценчĕн хуçи пур. Шел, хальлĕхе çак ĕç Чăрăшкасси тата Янăш ял тăрăхĕсенче çителĕксĕр пулса пырать. Вĕсен кăтартăвĕ 50% çитеймен. «Хуçалăх çаврăнăшне кĕмен çĕрсене хăвăртрах шута илсен ял тăрăхĕн бюджечĕн тупăш пайне пуянлатмалли çăл куç пулнине самантлăха та манман ертӳçĕсен ĕçĕ те кал-кал пынине хăварах курса-туйса тăратăр, – тенĕ вырăнти влаç тытăмĕнче ĕçлекенсене асăрхаттарса Георгий Егоров. – Сире çапла тума мĕн чăрмантарать?..»

Канашлăвăн иккĕмĕш ыйтăвĕ те çĕрпех çыхăннă. Нумай ачаллă çемьесен пурнăç шайне лайăхлатас тĕллевпе çак категори çемьесене çĕр лаптăкĕпе тӳлевсĕр тивĕçтересси аван пурнăçланать. Çав кун Апаш ял тăрăхĕнчи тепĕр 22 çемье район администрацийĕн пуçлăхĕн аллинчен çĕр сертификатне илнĕ. Ĕнерхи кун тĕлне телейлисен шучĕ 444 çемьене çитнĕ.

– Нумай ачаллă çемьесене уйăрса панă çĕрĕн пĕтĕмĕшле лаптăкĕ – 33 гектар, – пĕлтерчĕ Георгий Иванович. – Шута илнĕ çемьесенчен 165-шĕ – пурăнмалли çурт-йĕр хăпартма, 279-шĕ хушма хуçалăха аталантарма çĕр уйăрма ыйтса хут çырнă. Кашниех хăйне тивĕçтерекен çĕр лаптăкĕллĕ пулĕ. Ку – пирĕн тĕллев.

■ **А.СТЕПНОВ**

Тĕслĕх

## Палăртни пурнăçланатех

Красноармейски ял тăрăхĕ – районта чи пысăкки. Унти 12 ялти 2864 хуçалăхра 6481 çын пурăнать. Демографи лару-тăрăвĕ лайăхланни палăрать. Иртнĕ çул 84 ача çĕр çине килнĕ, 70 çын вилнĕ.



*• Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Э.Ермаков С.Васильевăна Хисеп хучĕпе чыслать.*

Пĕлтĕрхи ĕçхĕл çинчен тунă отчетра çакăн тата ытти çинчен ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Эдуард Ермаков тĕплĕ чарăнса тăчĕ. «Вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама эпир ялсен старостисене тата актива анлăраххăн явăçтарма тăрăшатпăр. Çакă усă кӳрет. Депутатсен 9 ларăвĕнче 42 йышăну тунă. Ял тăрăхĕн гимнне, старостăсем çинчен калакан положение çирĕплетнĕ. Ял тăрăхĕн администрацийĕ кунсăр пуçне 142 йышăнупа 108 хушу кăларнă. Гражданесене тĕрлĕ ыйтупа йышăнассине тĕпе хуратпăр. Шăпах йĕркелӳ мероприятийĕсем ирттерни кулленхи ыйтусене татса пама пулăшу кӳрет те», – терĕ Эдуард Юрьевич.

Ырă ĕç чăннипех нумай ял тăрăхĕнче. Пĕлтĕр 35 çемье 10500 пин тенкĕлĕх çăмăллăхлă кредитпа усă курнă. Çамрăксене çар ретне тăма хатĕрлессине лайăхлатнăшăн тата çар учетне тивĕçлипе туса пынăшăн ял тăрăхĕн администрацийĕ ЧР Министрсен Кабинечĕн III степень Дипломне тата куçса çӳрекен кубока тивĕçнĕ. Налуксем пуçтарса бюджета пуянлатассипе те ĕç-пуç аван пырать. Çĕр налукĕ пухассине отчетлă тапхăрта 119 процент пурнăçланă. Район центрĕн кăнтăр-хĕвел анăç микрорайонĕнче çĕнĕ урамсем ӳссе ларнинче те, вĕсен социаллă тытăмне аталантарас тĕлĕшпе проектпа смета документчĕсене хатĕрлеме бюджетран укçа-тенкĕ уйăрнă çĕрте те ял тăрăхĕнче вăй хуракансен тӳпи пĕчĕк мар. Çурт-йĕрпе çул-йĕр тăвас тата юсас енĕпе сахал мар ĕçленĕ. Тротуарсем юсас тата çĕнĕрен тăвас тесе те пĕлтĕр ытти çулхинчен тухăçлăрах вăй хунине палăртма кăмăллă. Ача-пăчана выляса савăнма 3 лапам уçнă. Тирпейилем кĕртес тĕлĕшпе район центрĕпе ялсенче çурхи тата кĕрхи уйăхлăхсем ирттернĕ, эрнесерен санитари кунĕсем йĕркеленĕ, мĕн пур ĕçе ятарлă планпа килĕшӳллĕн туса пынă.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ кунпа пĕрлех отрасльсен аталанăвĕ пирки те чарăнса тăчĕ, правăна сыхлакан органсемпе çыхăнса ĕçлени, ĕçкĕçсемпе çине тăрса кĕрешни, ветерансене, хĕрарăмсене явăçтарса ирттерекен мероприятисем пирки пĕлтерчĕ, 2014 çулхи тĕллевсене те асăнмасăр иртмерĕ.

Район администрацийĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Михаил Голубев, полицин участокри уполномоченнăйĕ Александр Трофимов, райбольницăн тĕп врачĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Эдуард Мноян, выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин тĕп врачĕн çумĕ Светлана Шаронова, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳçи Альбина Петрова, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ Борис Федотов тата социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Зинаида Петрова унăн сăмахне хушма информаципе пуянлатрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Шестаков Красноармейскисен иртнĕ çулхи ĕçне пĕтĕмлетрĕ. «Лайăх утăмсене ырă хак пама пĕлмелле. Çĕрпе пĕлсе, тĕрĕс тата йĕркеллĕ усă курмалла. Кашни лаптăкăн хăйĕн хуçи пулмалла», – палăртрĕ Андрей Владимирович. Вăл Культура çулталăкĕнче культурăн районти кашни учреждениne пĕрер музыка инструменчĕ туянса пама шантарчĕ. Кăçал Чатукассисем хăйсен ялĕ – 900, Тусайсем 600 çул тултарнине уявлассине, район кунĕ утă уйăхĕн 5-мĕшĕнче Карайра иртессине пĕлтерчĕ, конференци депутачĕсемпе унта хутшăннисен ыйтăвĕсене хуравларĕ.

Эдуард Юрьевичпа Андрей Владимирович патне ыйту сахал мар пулчĕ. Тĕслĕхрен, «КЕТРА» кирпĕч заводне тăм турттарма çул тăвасси, Васнар ялĕнчи Гагарин урамне çул сарасси, райцентрти Механизаторсен урамĕнчи, Крентейкасси ялĕнчи тата Липовкăри Л.Спасов урамĕнчи çулсене юсасси, Г.Степанов урамĕнчи икĕ çурта йĕркене кĕртесси, «Бахча» ООО çĕрĕсене усă курма «Таябинка» агрофирмăна парасси, урамсене каçхине çутатса тăрасси, районăн 80 çулхи юбилейĕ тĕлне район энциклопедине хатĕрлесе кăларасси тата ытти те. Вĕсем пурнăçа кĕресси пирки иккĕленме кирлĕ мар.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

• ➡ *6, 11, 12 стр.*

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА пуш, 17-23

## 17 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
Туçара вара хальхи вăхăтра та сывă пурнăç йĕркине пропагандăламалли, спорт, культура мероприятийĕ йĕркелемелли, канмалли кĕтес çук. Ял çамрăкĕсем ирĕксĕрех сĕм çĕрлечченех ĕçлекен хупах еннелле утаççĕ. Унта вара – «ирĕклĕ программа». Эрехĕ те, сăри те çителĕклех. Хальхи ăрури хĕрсемпе каччăсем хăйсен чечек пек илемлĕ çамрăклăхне самай вăхăт иртнĕ хыççăн мĕнпе аса илме пултарĕç-ши? Çĕнĕ çулта ӳсĕрĕличчен ĕçнĕ, тепĕр уявра хирĕççе çапăçса пĕтнĕ, виççĕмĕшĕнче преступлени тунă... Çапла мар-и-ха? Малашне те çамрăксем, эпир шанакан ăру, çĕрпе пĕлĕт хушшинче ирĕклĕн хăйсем тĕллĕн, пĕр интерессĕр çеç пурăнсан, пушă вăхăтне тĕллипаллисĕр ирттерсен пуласлăха камсене шанса памалла пулать-ха? Пирĕн тăрăхри паянхи ертӳçĕсем те, хиселлĕ çынсем те ватăлаççĕ. Ĕмĕр хастар пулмаççĕ-çке. Çамрăксен культура шайĕ çулсеренех чакса пыни пысăк хăрушлăх патне илсе пырать. Вĕсене кирлĕ пек воспитани пама, профилактика мероприятийĕ, ырă та савăнăçлă каç, тĕл пулу ирттерме Туçара культура çуртне тумаллах. Çак ыйтăва тĕрлĕ шайри депутатсен те, ертӳçĕсен те кун йĕркинчен кăлармалла мар. Раççей шайĕнче йышăннă Культура çулталăкĕ пирĕн ялшăн та асра юлĕ тесе шухăшлатпăр. 2014 çулта спорт залĕнчен тума пикеннĕ çуртра пуçласа культура мероприятийĕ ирттерме тытăнасса чăтăмсăррăн кĕтетпĕр.

**Антонина САЛМИНА, ял старости.**

Патăрьел районĕ,

Тури Туçа ялĕ

*Хастар*

# Ахальтен мар хисеплеççĕ Микулая

Кивçурт Марка ялĕн анăçран тухăçалла тăсăлакан тӳрĕ урамĕпе анаталла ансан тăкăрлăк хĕрринчи кирпĕчпе хупласа хăпартнă йывăç çурт куç умне тухать. Сарлака пӳрт тăрри çутă шăвăçпа витнĕрен хĕвел шевлипе йăлтăртатать. Ку – Николай Сергеевич Христофоров хуçалăхĕ. Вăл мана картишĕнче кĕтсе илчĕ. Кил хушшине тăрăшсах юртан тасатать. Курите умĕнче – виçĕ ĕне. Ырă шăршăллă утта çăвар тулли кавлеççĕ. Пĕри пăрулană ĕнтĕ, тепри те кĕçех йыш хушмалла. Сурăх, чăх-чĕп йышлă. Çăва тухсан хур-кăвакалĕ нартлатма-какалама тытăнать. Ӳркенмест Микулай: выльăх-чĕрлĕхе, кайăккĕшĕке юратса пăхать.

Улăм витнĕ, пысăках мар çенĕклĕ пӳртре пурăнатчĕ унăн амăшĕ Марье аппа. Ăшра тĕвĕленнĕ чуна çуратасах, ватлăхра хăйне шыв паракан пулĕ терĕ. 1949 çулхи авăн уйăхĕнчи сар хĕвеллĕ пĕр кунра алла илчĕ вăл хăйĕн ывăлне. Юлашки çăкăр татăкне ăна пама тăрăшрĕ. Вăрçă хыççăнхи пурнăç питĕ йывăрччĕ пулин те кунсерен вăй илсе аталанчĕ çамрăк чун.

Николай шкул пĕтернĕ хыççăн имшертен хăйĕн тантăшĕсемпе салтак тивĕçне пурнăçлама май килменшĕн чĕререн пăшăрханчĕ. Çавăнпах-и, тен, общество ĕçхĕлне вăхăтне шеллемесĕр хутшăнать. Çакăх хăйĕн малашнехи кунçулĕ валли çирĕп никĕс хывма пулăшрĕ. Юратнă мăшăрĕпе Зойăпа – Вăрнар районĕнчи Мăн Явăш хĕрĕпе – 4 хĕр çуратса пурнăçăн анлă çулĕ çине кăлараççĕ. Йышлă мăнукĕ савăк сассипе савăнтарать. Шупашкарти агрегат заводĕнчи хурçă шăратакан цехра 15 çул тăрăшнă. Тивĕçлĕ канăва палăртнинчен маларах тухсан яла таврăнать. Кунта та алă усса лармасть, Çатра Марка фермине каçхи хурала кĕрĕшет. Канăççăр чĕреллĕ Николай Сергеевич художество пултарулăх коллективĕн хастар членĕ, спектакльсенче тĕрлĕ сăнар калăплать. Уçă сассипе юрă шăрантарса савăнтарать. Ялти пĕр мероприяти те вăл хастар хутшăнмасăр иртмест. Ахальтен мар Н.Христофорова Кивçуртсем кăна мар, Çатра Маркасем те хисеплеççĕ.

**Михаил ИГНАТЬЕВ, Кивçурт Марка ял старости.**

Шупашкар районĕ

«Вырăнти хăй тытăмлăх» проект ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.
Юрий СТЕПАНОВ хатĕрленĕ. • Çырăр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар». • Шăнкăравлăр: /8352/ 28-85-01.

# МӖН ÇЫРАÇÇӖ ХАÇАТСЕМ

# Наталья Крачковская актриса: «Тӗп вырӑнта яланах çемье пулнӑ»

*Наталья Леонидовна – Раççей тава тивӗçлӗ артистки. 40 çул ытла ӗçлесе вӑл 70 ытла фильмра ӳкерӗннӗ. 2013 çулта 75 çул тултарнӑ.*



**– Арçынсем чӑнахах та сирӗнпе ӳкерӗнме хӑранӑ-и? Сирӗн пирки ыттисене пӑхӑнтарма юратать тенӗ, çапла вара вӗсем режиссерсене рольтен хӑтарма та ыйтнӑ. Çаплах-и ку?**

– Пулнӑ çавнашкал шухӑш. Анчах та ку маска кӑна. Çапла, вӑйлӑ, çапах та пурнӑçра пулӑшма пултарнӑ хаярлӑх çук манра. Кӳрентерме те çӑмӑлах мана...

**– Актерсенчен нумайӑшӗ Булгаковпа çыхланма хӑрать. Юрий Кара режиссера хурав париччен нумай шухӑшларӑр-и?**

– Вылянӑ май хама яланхи пек мар туяттӑм. Анчах та çамрӑклӑх! Нумай япалана ӑнланман. Ӳкерӗннӗ чухне актерсене пӗрмаях çапла калаттӑм: «Ачасем, чиркӗве кайӑр, çакнашкал пӑлхавлӑ фильмра ӗçленӗшӗн каçару ыйтӑр». «Бесы» спектакль хыççӑн пурнӑçра йывӑрлӑхсем сиксе тухрӗç /унта эпӗ шуйттан рольне вылянӑччӗ/. Спектакльсене пӗрмаях мӑн кун умӗнхи эрнере е çак уяв умӗнхи эрне кун лартатчӗç. Режиссера çав кунсенче вылямастӑп тесе пӗлтереттӗм. Кунта нимӗн хӑрушши те çук тетчӗç. Анчах та ӑçта кайса кӗрӗн – вылямa тиврӗ. Çакӑн хыççӑн вӑйлӑ чирлерӗм.

**– Эсир малти вырӑна çемьене мар, ӗçе кӑларса тӑратнӑ пек курӑнаттӑр.**

– Çук, тӗп вырӑнта маншӑн яланах çемье пулнӑ. Çав хушӑрах ӗмӗре ӗçре ирттернӗ. «Эпӗ актриса, çемье маншӑн ниме те пӗлтермест» текенсем суяççӗ. Хӗрарӑмшӑн мӑшӑрӗ, ачисем яланах тӗпре.

**– Арçынсен çирӗп хул пуççийӗ çине таянма пултарнӑ-и?**

– Манӑн нимӗн пирки те ӳпкелешмелли çук, мӑшӑрӑм лайӑх çын пулнӑ. 26 çул пӗрле пурӑнтӑмӑр. Эпӗ çакна пӗлсе тӑнӑ: манӑн стена пур, кирек мӗн сиксе тухас тӑк ун хыçне пытанма пултаратӑп. Çак стена ишӗлсен питӗ хӑрушӑччӗ. 50 çул та тултарманччӗ-ха ун чухне. Мӗн тумаллине те пӗлместӗп, çапах та тахӑш самантра шӑла çыртса хама сӑмах патӑм: «Пурӑнмалла!» Мӑшӑрӑм вилсен тепӗр хут качча тухас шухӑш та пулман.

**– Эсир упӑшкӑртан вӑйлӑрах пулнӑ-и?**

– Паллах. Хӑш-пӗр самантра çакӑ пулӑшнӑ та. Мӑшӑрӑм çав тери çемçе кӑмӑллӑ, лӑпкӑ çынччӗ. Хирӗçӳ сиксе тухсан та вӑл чӗнместчӗ, эпӗ тарӑхаттӑм. Лӑплансан ман енне çавӑрнатчӗ те: «Апатланӑпӑр-и?» – тетчӗ.

**– Тахçан эсир балетра та ташланӑ-им?**

– Çапла, анчах ӗç пулса пӗтеймерӗ. Ура ыратнипе аптрама пуçларӑм. Сӑмах май, ун чухне питӗ начарккаччӗ эпӗ. Картишӗнче Том Сойер тесе чӗнетчӗç – мӗншӗн тесен кӗске çӳçлӗччӗ. Лара-тӑра пӗлместӗм – арçын ачасемпе йывӑç çине хӑпарса каяттӑм, лапталлa выляттӑм, тен, çавӑнпах пулӗ ӳт хушӑнса ӗлкӗреймен. Çав çулсенчи сӑн ӳкерчӗксем çинче эпӗ Освенцим ачи пекех. Кукамай, паллах, эпӗ ырханкка пулнӑшӑн кулянатчӗ. Асанне /Тбилисирен/ тӳрех «ӗçе пикенчӗ». Пӗр сӑмахпа, кукамай пуçланӑ ӗçе асанне ӑнӑçлӑ вӗçлерӗ – «самӑртрӗç» мана.

**– Ытлашши виçене пула вӑтанман-и?**

– Арçынсем ырханкка хӗрарӑмсене юрататпӑр тесе ахаль çеç калаççӗ... Манпа туслисем эпӗ тулли кӗлеткеллӗ пулнипе кӳренмелли нимех те каламан. Пӗр каччӑпа çӳреттӗм. Таса юрату. Пӗррехинче каçхине бульварпа пыратпӑр, йӗри-тавра ырханкка хӗр ачасем çӳрени тарӑхтарса ячӗ.

Пыратӑп çапла, пуçри шухӑшсене хӑвалатӑп. «Всӗ, – тетӗп, – начарланма пуçлатӑп!» Манӑн каччӑ юпа пек хытса тӑчӗ: «Мӗскер эсӗ, Наташа?! Тархасшӑн, ан начарлан». Вара... макӑрса ячӗ. Эпӗ çав-çавах чарӑнмастӑп-ха: «Акӑ аннӳ патне паллашма илсе кайӑн, вӑл: «Кун пек мӑнтӑрскере ӑçтан тупрӑн?» – тейӗ. – «Манӑн анне нихӑçан та апла каламӗ!» – çирӗппӗн пӗлтерчӗ каччӑ. Унӑн амӑшӗ ӗмӗр тӑршшӗпех кӑштах мӑнтӑрланасшӑн иккен.

**– Нивушлӗ начарланма хӑтланса пӑхман?**

– Начарланасшӑн пулнӑ паллах. Апатлану институтӗнче консультацисем те илнӗ, эмелсем те ӗçнӗ, вӗсенчен сиенӗ ытларах. Вӑхӑт иртнӗçемӗн çакна ӑнлантӑм: хам тӗллӗн те, укçа тӑкакламасӑрах, начарланма пултаратӑп. Вара диетӑсен тапхӑрӗ пуçланатчӗ.

Володьӑпа Вася валли темиçе кунлӑха апат хатӗрлеттӗм те хам выçӑ тытасси çинчен пӗлтереттӗм. Ирхине те, каçхине те сухари çиетӗп. Диетӑн пӗрремӗш кунӗсенченех кӑмӑл япӑхчӗ. Ывӑлӑм чӑтаймастчӗ: «Анне, эсӗ командировкӑна часах каятӑн-и?» Ӗçрен ывӑнса таврӑнакан мӑшӑрӑм кухньӑна чӗрне вӗççӗн утса каятчӗ. Иккӗшӗнчен пӗрне апат çинчен ыйтма турӑ ан хуштӑрах!

Выçӑ пурӑннӑ виççӗмӗш кун тӗлне йӗритавра пурте тӑшмансем, мана никам та юратмасть пек туйӑнать. Пурнӑç пӗлтерӗшӗ çинчен тарӑн шухӑша путса çывӑрма выртатӑп, анчах ыйхӑ килмест. Унталла-кунталла çаврӑнатӑп. «Эсӗ шӑпрах хуйхӑр-ха. Çывӑрма памастӑн!» – тет мӑшӑрӑм. Ир еннелле 3 сехетсенче çакна ӑнланса илетӗп: купӑста яшкинчи пӗр татӑк какая çинипе инкекех пулмӗ – пиçнӗ ашра калори сахал... Кухньӑна никам сисмелле мар утатӑп. Какай çиетӗп. Шухӑш каллех пуçа пӑралать: пӗр турилкке яшка çинипе темех пулмӗ. Кун хыççӑн сӗтел çине кастрюле лартатӑп... Тискер чӗр чун пекех тӗпӗ курӑнмиччен çиетӗп.

Тинех мӑшӑрпа та, ывӑлпа та, пурнӑç пӗлтерӗшӗпе те кӑмӑллӑ эпӗ – çывӑрма утатӑп. Ирхине манӑн арçынсем, 3 кун çакӑн пек йӗркене аран-аран чӑтнӑскерсем, кулаççӗ. Вӗсем пушӑ кастрюле курнӑ, эппин, черетлӗ диета вӗçленнӗ...

**– Хӑвӑра паян телейлӗ çын тесе шухӑшлатӑр-и?**

– Паллах. Çынна пурӑнма кирли пӗтӗмпех пур манӑн. Тусӑмсен, çывӑх çыннӑмсен тимлӗхӗ, куракансен юратӑвӗ.

/«Айболит»/.

# Пуринчен те нумайрах вӗçнӗ çын

***Тивӗçлӗ канӑва тухсан çын килсӗр пурӑнаймасть тесе шухӑшлама хӑнӑхнӑ. Вӑл хӑш-пӗр чухне кӑна унта та кунта тухать, çул çӳресех каймасть, самолетпа нихӑçан та вӗçмест темелле. Хаклӑ пулнипе кӑна мар, «тухтӑрсем хушмаççӗ». Çапах та официаллӑ йӗркепе планета çинче час-часах вӗçекен çын тесе йышӑннӑ Фредерик Финн 73 çулта.***

## Талӑкра 3 хут – Атлантика урлӑ



Тусӗсемпе ӗçтешӗсем Фреда çурӑм хыçӗнче Вӗçекен Финн тесе чӗнеççӗ. Вӑл финн мар, акӑлчан тата кӑштах украин, мӗншӗн тесен юлашки 8 çулта Полтава çывӑхӗнчи Комсомольскра пурӑнать. Финн – унӑн хушамачӗ.

Фредерика çуралнӑ кӗтесӗнче Аслӑ Британире тупма май килчӗ.

– Эпӗ нихӑçан та нумай вӗçме ӑнтӑлман, – терӗ пирӗнпе скайп урлӑ çыхӑннӑ Финн. – Пӗрремӗш вӗçев 13 çулта чухне пулчӗ. Пирӗн çуртран инçех мар аэродром вырнаçнӑччӗ, унта самолетсем вӗçсе хӑпарнине, анса ларнине курма çӳреттӗм. Пӗррехинче летчик пӗрле вӗçме сӗнчӗ.

18 çула çитсен вӑл канцеляри таварӗсем кӑларакан вырӑнти компание вырнаçнӑ. Чи çамрӑкки пулнӑ май Фина командировкӑсене час-часах янӑ. Ытларах чухне океан урлӑ – Англирен АПШна тата Канадӑна.

– Тепӗр чухне эрнере 3-4 хут самолетпа вӗçме тиветчӗ, – аса илет Фред.

Малтанах вӗçевсем халтан янӑ – нумай вӗçмелле, ларма тӑвӑр. Лондонпа Нью-Йорк хушшинче çӗнӗ йышши «Конкорд» самолетсем çӳреме пуçласан çул 3-4 сехет тараннччен кӗскелнӗ. Пӗррехинче талӑкра виçӗ хут Атлантика урлӑ каçма пултарнӑ. Ку енӗпе ӑна çитекенни никам та пулман.

## Уйӑх патне 31 хут çитсе килнӗ

Финн 73 çул тултарнӑ тӗле мӗн чухлӗ вӗçнине пӗлмест – тахçан шутланӑ, халӗ пӑтрашӑнса кайнӑ. Юратнӑ «Конкордне» çеç ас тӑвать: 718 авиавӗçев, пӗтӗмпе 24 млн ытла километр /ку Уйӑх патне 31 хут çитсе килнипе шайлашуллӑ/. Икӗ кӑтартӑва та Гиннесс рекорчӗсен кӗнекине кӗртнӗ. Çапах та нумайӑшӗ çакӑнпа килӗшесшӗн пулман.

– Пӗррехинче сайтра эпир Финн мистера пирӗн авиалинисен самолечӗпе çӗр хут вӗçнӗ ятпа саламларӑмӑр, – терӗç «Украинӑн пӗтӗм тӗнчери авиалинийӗсенче» /вӗсем ӑна чи юратнӑ клиент вырӑнне хураççӗ/.

– Çавӑнпа пӗрлех ытти пассажира тӗнчере вӑл час-часах вӗçекен пассажир пулнине аса илтертӗмӗр. Çакна эпир мар, Гиннесс рекорчӗсен кӗнеки çирӗплетнӗ. Пирӗн пата тӳрех çырупа тухрӗç: ку апла мар, Раççейре тӗнчери мӗн пур çӗр-шыва вӗçсе килсе килнӗ çынсем пур, Фред вӗсенчен çуррине кӑна /тӗрӗсрех, 139-шӗнче/ пулнӑ. Çапах та вӑл мӗн пур çӗр-шыва çитме ӑнтӑлмасть. Унӑн рекорчӗ – вӗçевре ирттернӗ çухрӑмсен хисепӗ.

Вӑхӑт иртнӗçемӗн Фред Финн паллӑ çын пулса тӑнӑ. Ӑна самолетсене паллама пуçланӑ. Фред каласа кӑтартнӑ тӑрӑх – пӗррехинче вӑл вӗçеве хатӗрленнӗ чухне вырӑнсем пулман, вара пӗр авиакомпани ӑна экипаж членӗсем валли уйӑрнӑ вырӑна лартнӑ.

Тӗлӗнме кирлӗ те мар ӗнтӗ, çынсене тӳпере илсе çӳрекенсем Финн шухӑшне тӗпе хума тытӑннӑ. Ричард Брэнсон миллиардера Финн лешӗ авиакомпани йӗркеленӗ чухне пулӑшнӑ. Тӗслӗхрен, халӗ самолетсенче минтерсемпе, тапӑчкипе, ӳте нӳретекен кремсемпе никама та тӗлӗнтерейме́н, çапах та веçех Финн Брэнсон авиакомпанине панӑ сӗнӳ-канашран пуçланнӑ.

Вӑхӑт иртнӗ май Вӗçекен Финн çӗр çинчи ӗçне пӑрахнӑ, авиалинисенче ӗçлеме пуçланӑ.

## Самолет тӗп вырӑнта мар

Вӗçекен Фредӑн харпӑр хӑй пурнӑçӗ нумай вӑхӑт кирлӗ пек йӗркеленеймен. 65 çул тултарнӑ тӗле Фред икӗ хутчен уйрӑлнӑ. Арӑмӗсем ӑна пӑрахнӑ, мӗншӗн тесен упӑшки уйӑхӗ-уйӑхӗпе килте пулмасан ку вӑл çемье мар паллах. Фред пӗччеллӗхпе çырлахнӑ та темелле, анчах та 2006 çулта Аллӑна тӗл пулнӑ.

– Эпир Интернетра паллашрӑмӑр. Каярах эпӗ Украинӑна ӗçпе кайнӑччӗ, тӗл пултӑмӑр, пӗрре курсах юратса пӑрахрӑм, – аса илет Финн. – Украинӑра эпӗ «Дискавери» канал валли документлӑ фильм ӳкереттӗм.

Фредран чылай çул кӗçӗнрех Алла та юратса пӑрахнӑ. Уншӑнах Британи арçынни Полтава тӑрӑхне куçса килнӗ, акӑлчанла та кунта пӗр Алла филолог çеç калаçать пуль.

– Унпа паллӑ çын пулнипе, çул çӳреме май пуррипе паллашман – эпӗ ниçта та вӗçместӗп, хӑратӑп, – тет Алла. – Фред ыттисем пек çынах. Вӑхӑта çемьепе ирттерме юратать, тутлӑ апат хатӗрлет. Килти ӗçсене те манпа пӗрле пайлать: кӗпе-тумтир çӑвать, кил-çурта тирпейлет, украин арçыннисенчен çакна кӗтсе илеймӗн.

Мӑшӑрӗ килте çулталӑкне 3 уйӑх кӑна пулнипе Алла тахçанах çырлахнӑ ӗнтӗ.

**Елена МИЛЬЧАНОВСКА.**

/«Собеседник»/

# Пултаруллисене чысланă

***Çурхи пĕрремĕш уяв умĕн Çĕнĕ Шупашкарта «Хĕрарăмсен пултарулăх чикки çук – 2014» проекта пĕтĕмлетнĕ.***

Унта Чăваш Енри тĕрлĕ хулари тата районти 19 чиперук хутшăннă. Вĕсенчен 11-шĕ финала тухнă. Жюри çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе тата ятарлă парнесемпе чысланă.

Асăннă проект талантлă хĕрарăм республикăра йышлă пулнине çирĕплетнĕ. Вĕсем Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта, Çĕмĕрлере, Комсомольски, Шупашкар районĕсенче пурăнаççĕ. Хĕрарăмсенчен ытларахăшĕ тĕрĕ тĕрлет, çĕнĕ çипуç шухăшласа кăларать, çыхать, çĕлет, хаклă чултан, шăрçаран тĕрлĕ капăр хатĕрлет, ӳкерет, çăмпа кĕççерен темĕн те пĕр ăсталать... Проекта хутшăнакансем йĕркелӳçĕсене хăйсем пирки пĕлтерме май килнĕшĕн чĕререн тав тунă. Çитес çул унта хĕр тусĕсене явăçтарма сăмах панă.

**Р.ИВАНОВА.**

**И З В Е Щ Е Н И Е**

Администрация Батыревского района Чувашской Республики проводит 28 апреля 2014 года в 14.00 часов по московскому времени аукцион, по открытой форме подачи заявок и предложений о цене по продаже земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения:

- земельный участок с кадастровым номером 21:08:010401:30 площадью 35822 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Долгоостровское с/пос. для сельскохозяйственного производства, начальная цена 175000 руб., шаг аукциона 5%.

Заявки принимаются с 24 марта по 23 апреля 2014 года по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5, каб. №7. По вопросам проведения аукциона, оформления заявок и перечисления задатков обращаться по тел.: (83532)6-14-26 или ознакомиться на сайте www.torgi.gov.ru.

## УСЛУГИ

**25.Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот /распашные, откатные, автоматика/. Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**32.Наркология. Живите трезво!** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение** колодцев: скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**127. Автокрана** – 30 м, 25 тн, **экскаватора-погрузчика** "Volvo" BL 71 с гидромолотом. Водопровод и канализация. Т. 8-967-470-32-20.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и доставка** ж/б колец. Т. 8-905-343-42-07.

## РАБОТА

**97.Требуются рабочие** на монолит. Вахта. Оплата своевременная. Т. 8-917-677-42-98.

## РАЗНОЕ

**173.**Утерянное св-во АК №048979 категории "В", выд. 16.04.2012 г. на имя Музякова Е.И., считать недействительным.

**174.**Утерянное св-во АК №048952 категории "С", выд. 27.03.2012 г. на имя Музякова Е.И., считать недействительным.

## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Т. 89170664146.

**реклама пĕлтерӳ**
Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.excomfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**ООО "СТЭКС-АГРО"**
принимает заказы на поставку
**МИНЕРАЛЬНЫХ УДОБРЕНИЙ.**
Чебоксары, пр. Мира, 3 б.
**Т.: 28-77-28, 89050274851.**

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Доставка. Замер. Без выходных. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич,** брусчатку, **кольца,** ОПГС, песок, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 89033225766.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА** пластиковые, железные **ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**33.Гравмассу,** песок, **керамзит, щебень, торф.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**52.Пластиковые ОКНА, железные двери.** Замер. Доставка бесплатно. Без выходных. Т.: 8-917-652-96-94, 89276679588.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

## *Саламлатпăр*

***Юратнă та хаклă аттене, кукаçине, тăвана – Етĕрне районĕнчи Ирçе ялĕнче пурăнакан <u>Роман Романович ГРИГОРЬЕВА</u> – 60 çулхи юбилейпе чун-чĕререн тухакан ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Пурнăç çулĕпе пĕр такăнмасăр утма çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатпăр.***

***<u>Ачисем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, сывăх тăванĕсем.</u>***

Объявление Администрации Комсомольского района, опубликованное в газете №28-29 /26434-26435/ от 15 февраля 2014 года, считать недействительным.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды до 49 (сорока девяти) лет из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровым номером 21:17:050801:705, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 194713 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ "МФЦ", с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды до 49 (сорока девяти) лет из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровым номером 21:17:050801:706, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 33127 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ "МФЦ", с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Организатор торгов - конкурсный управляющий Колсанов Иван Александрович (ИНН 212809878323, СНИЛС 122-045-713 04, г.Чебоксары, ул.Гузовского, 14, а/я 28, kolsanov@rambler.ru, т.(8352)461848), член НП СОПАУ "Альянс управляющих" (ИНН 2312102570, ОГРН 1032307154285, 350059, г. Краснодар, ул. Северная, 309), действующий по решению Арбитражного суда Чувашской Республики по делу № А79-13783/2012 от 29.04.2013г., сообщает, что торги по продаже имущества ЗАО "Полюс 2000" (ИНН 2128034102, ОГРН 1022101141710, г.Чебоксары, ул.Эльгера, д.11, СНИЛС 015-023-009-644) посредством публичного предложения (сообщение **16030128287** в газете "Коммерсантъ" №241 от 28.12.2013г.) по лотам №№6-9 признаны несостоявшимися ввиду отсутствия заявок. Победителем торгов по лотам №2 с ценой 73872,0 руб., №3 с ценой 38880,0 руб., №4 с ценой 176130,0 руб., №5 с ценой 158220,0 руб. признан Николаев Дмитрий Николаевич, по лоту №1 с ценой 19980,0 руб. - Курдюков Антон Олегович. Заинтересованность покупателей по отношению к должнику, кредиторам, конкурсному управляющему отсутствует.

## ПРОДАЮ

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**79.Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**108.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89196535092.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**128. Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 5 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.



**126.Теплицы** из поликарбоната: 3х4, 3х6, 3х8, 3х10 – в наличии. Доставка по ЧР. **Пенсионерам скидки.** Т. 8/8352/ 36-06-16.

**134.Кирпич, кольца, ФБС блоки.** Д-ка манипулятором. Т. 447353.

**142.ОВС-25** зернопогрузчик, **ЗПС-100** или **меняю.** Т. 89050275457.

**144.Кирпич, керамблок, кольца.** Дёшево. Д-ка. Т. 213680.

**154.<u>Грабли</u>** <u>от 24 тыс. руб.,</u> **<u>плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.</u>** Низкие цены. **Всё новое!** Доставка! Тел.: 8-927-851-68-58, 8-937-955-98-02.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

**169.Блоки** керамзитобетонные, **песок, керамзит.** Т. 48-68-95.

**171.Срочно корову** /1 отел в марте/. Т. 8-927-866-78-28 /д. Карачуры, Чебоксарский р-н/.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**851.Кирпич, кольца.** Д-ка /вездеход манипулятор/. Т. 444407.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-927-999-37-37.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

*Тишкерӳ*

# Сăмах пултăр татăклă...



Чăваш чĕлхине юратакансем валли республикăра çулсеренех «Чĕвĕлти чĕкеç» конкурс ирттереççĕ. Манăн ачасем те çав конкурсра пĕрре мар пулчĕç. Кăçал та икĕ ывăл, 3-мĕш тата 7-мĕш класра вĕренекенсем, хутшăнчĕç. Паллах, конкурс ачасен тавра курăмне, пĕлĕвне хаклamalли, ăна аталантармалли мел. Çакна ырламалла çеç. Анчах...

Конкурс иртнĕ хыççăн ачасем кашнинчех ыйтăвĕсене киле илсе килеççĕ. Эпĕ те вĕсемпе паллашатăп. Ыйтусене тишкернĕ май кашнинчех кăлтăксем пурри кăмăла хуçать. Конкурс ыйтăвĕсене мĕне пула тĕплĕн хатĕрлесе çитерейменни пирки пуç вататăп.

6-7-мĕш классем валли хатĕрленĕ ыйтусене, 3 балпа хаклаканнисене, тишкерме тытăнтăм. Кусем чи ансаттисем пулма тивĕç. Анчах кунта та тĕплĕн калăпласа çитерейменни тупăнчех. *Пăшăлтатать, шăкăлтатать, анчах хыттăн калаçмасть* тупмалли юмахăн тупсăмĕ мĕнле-ши? Хурав вариантсем /А/ карчăк; /Б/ радио; /В/ пулă; /Г/ чуста; /Д/ çил-тăман. /Чăваш алфавитĕнче «Ă» сас палли те пуррине «маннă» пулас/.

Ай-яй-яй! Карчăк-ши? Ватăскер *шăкăлтатса* юмах ярса парать пулĕ мăнукĕсене. Тен, юсавсăр радио? Шалта темĕн *пăшăлтатать*, анчах – илтĕнмест, шахвăрту!

Чуста тейĕпĕр тӳррипе. Анчах ыйтăвне тĕрĕс мар йĕркеленĕçке! Тĕрĕссипе, *пăшăлтатать, чăшăлтатать* темелле вĕт, «чуста лайăх хăпарнă, чăшăлтатать кăна», – тет-çке халăхăмăр. Пĕр сăмаха тирпейлесе çитерейменте – ыйту арпашуллă пулса тухнă.

Тăватă балпа хакланă ыйтусенче те пуça хыçмалли тупăнчĕ. *Тимĕр шапа, тимĕр карта, тимĕр пăрçа, тимĕр витре, тимĕр алăк, тимĕр кăшăл, тимĕр тăпри, тимĕр тукмак, тимĕр йытă, тимĕр кашăк, тимĕр арча, тимĕр тылă.* Тӳрĕ пĕлтерĕшлĕ тĕслĕхсем миçе? /А/ 9; /Б/ 8; /В/ 7; /Г/ 6; /Д/ 5. Пĕлĕшĕм тӳрĕ пĕлтерĕшлисен йышне ултă тĕслĕх çеç кĕртрĕ. Эпĕ вунă тĕслĕхе тӳрĕ пĕлтерĕшлĕ тесе шухăшлатăп. *Тимĕр шапа, тимĕр пăрçа* çеç тӳрĕ мар пĕлтерĕшлĕ кунта. Анчах хуравсенче «10» тени çук. Эппин, *тимĕр тăпри, тимĕр йытă е тимĕр тылă* куçăмлă пĕлтерĕшлĕ тесшĕн-ши? *Тимĕр йытă* тĕслĕхе пăхăпăр. Вăл тимĕртен шăратса тунă пĕчĕк йытă кӳлепи-ши е пысăк палăк-ши? Тупмалли юмах пур-ха «тимĕр йытă çурт сыхлать» текенни. Анчах кунта та тимĕр пĕлтерĕшĕ çаплипех юлать. Йытă – сыхлаканни – куçăмлă пĕлтерĕшпе. Тимĕр йытă сăмах майлашăвĕ тупмалли юмахсăр пуçне хăй халлĕн çӳренине те илтмен.

Тен, *тимĕр тылă* куçăмлă пĕлтерĕшлĕ тесшĕн ыйтăва хатĕрлекенсем? Темле çав, килĕшесех килмест. Тылă мĕнне халĕ ачапăча Константин Ивановăн «Тимĕр тылă» хайлавĕнчен çеç пĕлет пулĕ. Пирĕн килте пурччĕ вăл – кантăр сӳслемелли тылă. Унăн кантăр хумалли пайне йывăçа вартса тунă. Çурăлса каясран ăна хăшĕ-пĕри, укçаллăраххи, шăвăçпа /калайпа/ сăрнă. Çавна тимĕрленĕ тылă е тимĕр тылă тенĕ те ĕнтĕ. Константин Ивановăн «Кин пуçне çиме «чупакан» тыллu те çавăн йышши пулнă-тăр. Шел, 12-13 çулсенчи ачасен вара çак ыйтăвăн хуравне чухăммăн çеç палăртса яма тивет.

18-мĕш ыйту хуравне те, эпĕ, хĕрĕхрен иртнĕ чăваш хĕрарăмĕ, словарьсемпе усă курса çеç тĕрĕс хуравлама пултартăм. Ку ыйту чăваш тумтирне ятарласа тĕпчекен ачасем валли ахăр. Мĕнех, эпĕ те пĕлтĕм *ултă* мĕн иккенне.

5 балпа хаклакан ыйтусене те тикĕслесех çитереймен. «Ваттисем сăнанă тăрăх çулла пĕлĕт хĕрелни мĕне пĕлтерет?» Тусăмсем, çулла та, çуркунне те кăнтăр кунĕнче пĕлĕт хĕрелчĕ тĕк – таврара çиçĕм ялтăртатнине, аслати кĕмсĕртетнине пĕлтерет. Часрах килелле чупмалла, мур илесшĕ!

Тĕрĕсрех вара ку ыйту çапла пулмаллаччĕ: «Ваттисем сăнанă тăрăх çулла *хĕвел аннă е тухнă чухне* пĕлĕт хĕрелни мĕне пĕлтерет?»

Вĕçленчĕ тишкерĕвĕм. Пĕр ĕçрех – килтетсĕр 3-4 ыйту. Çулсеренех ирттереççĕ ку ăйăа – кашнинчех куça шăйрăксем тăрăнаççĕ. Чĕвĕлти чĕкеç чĕлхине такам, чеескер, тăпăлтарса илсе чана-чакак сассипе чăнкăлтаттарма хăтланнăн туйăнать.

Конкурс йĕркелекенсене малашне тимлĕрех пулма сĕнес килет. Ĕçе алран кайтăр тесе ячĕшĕн туни никама та чыс кӳмест.

■ **Эльвира ИВАНОВА**

# Сăмах каçмăш

**Владислав ПЛАТОНОВ /Шупашкар районĕ, Шоркка ялĕ/ хатĕрленĕ**



**Сылтăмалла:** 5. «Хура çăкăр» роман авторĕ. 7. Çĕнтерӳ символĕ. 8. Чăваш халăх поэчĕ Геннадий ... 9. Ĕçчен çыннăн ...ĕ те ир вăранать. 10. Пахча çимĕçрен хатĕрленĕ çиме. 13. Анлă çул. 16. Лена юхан шывĕн юппи. 17. Тимĕр шăратнă çĕрти калăп. 18. Кăнтăрти йывăç çимĕçĕ. 22. Мускаври сувенир урамĕ. 24. Шалăвăн пĕр пайĕ. 25. Электрод. 26. Хăна çуртĕнчи чи хăтлă номер. 27. Ираида, Ира, вăлах – ... .

**Аялалла:** 1. Тинĕсри вăрăхурах. 2. Дарвин этем ...рен пулса кайнă тесе ĕнентернĕ. 3. Хăмасене çыпăçтармалли çавра пăта. 4. ... Маркс. 6. Коми Республикинчи хула. 11. Хирти кăшлакан чĕр чун. 12. Çул çинчи инкек. 14. Сасса вăйлатакан хатĕр. 15. Ăна тура кирлĕ мар. 19. Хайлав тĕсĕ. 20. Чăваш ...хыпарлавĕ. 21. Румынири автомашина марки. 22. «Ахрат» роман авторĕ. 23. Рингри кĕрешӳ.

**Сăмах каçмăшăн тупсăмĕсем**

**Сылтăмалла: 5. Иллек. 7. Лавр. 8. Айхи. 9. Автан. 10. Салат. 13. Тракт. 16. Алдан. 17. Опока. 18. Инжир. 22. Арбат. 24. Аванс. 25. Анод. 26. Люкс. 27. Ирина.**
**Аялалла: 1. Пират. 2. Упăте. 3. Шкант. 4. Карл. 6. Ухта. 11. Арлан. 12. Авари. 14. Рупор. 15. Кукша. 19. Жанр. 20. Радио. 21. «Дачия». 22. Аслан. 23. Бокс.**

*Пурнăçран*

# Кушак – ăслă чĕр чун

Эпĕ йышлă çемьере ӳснĕ, çавăнпа та пĕчченлĕхре мана питĕ кичем. Темрен шикленетĕп. Те шăплăхран хăратăп?

Пĕрре çапла килте пĕчченех юлма тиврĕ. Ăна-кăна ĕçлекелесе çӳренипе кун иртнине сисмерĕм. Каç пулчĕ те пӳртре пач пĕччен тăрса юлтăм: чунра лайăх мар. Каçхи апат турăм та кушака калатăп:

– Маша, паян эпĕ килте пĕчченех, çавăнпа та сана пӳртрен кăлармастăп. Манпа пĕрле çывăратăн.

– Мяу! – тет кушак. Вăл пӳртре сахал пурăнать. Каçа хирĕç апатланать те тухса каять. Каялла ирхине çеç апат çиме килет. Кушак алăк патне пычĕ те каллех:

– Мяу! – тет мана куçран пăхса.

– Ну, юрĕ. Тухса кĕр, анчах тархасшăн тарса ан пытан. Юрать-и? Хăвăртрах кил, – калатăп ăна.



Кушак ăнлансах итленĕ пек туйăнчĕ мана, анчах килмерĕ. Вырăн ăшне кĕрсе выртрăм та кĕнеке вулама пуçларăм: нимĕнле те çывăрса каяймастăп. Сасартăк кантăкра тем сасси пулчĕ. Тăрса пăхрăм – кушак иккен. Савăнсах кайрăм:

– Ой, Маша, мĕнле маттур эсĕ. Алăк патне пыр, уçса кĕртетĕп.

Эпĕ алăк уçнă çĕре вăл ман пата çитсе те тăчĕ. Кушака йăтса илтĕм те хам çума вырттартăм, анчах вăл ачашланкаларĕ те хăйĕн вырăнĕ çине кайса çывăрчĕ. Мĕншĕн тесен эпир кушака сĕтелпе вырăн çине хăпарма хăнăхтармастпăр. Апатне те вăл яланах пĕр вырăнта кăна çиет. Эпир сĕтел хушшине вырнаçсан нихăçан та пырса макăрмасть. Хурса парасса е пырса лартасса шăп-шăпăрт кĕтет.

Качча кайсан вара ман мăшăрăн килĕнчи кушакпа вăрçă пуçланчĕ. Мурка, Ваньăпа çывăрма вĕреннĕскер, çĕрĕн-кунĕн вырăн çинче хуçаланасшăн. Вараланса кĕрсен те, йĕпенсе килсен те вырăн çине хăпарса выртать. Эпĕ вара ăна хамăр вырăн çинчен хӳтеретĕп. Ку кушака пачах та килĕшмерĕ. Мĕнлерех тарăхса пăхатчĕ ман çине! Çитменнине тата, те ватăран, çĕрле те ытлашшиех тухса çӳреместчĕ. Тек Ваня çумне кĕрсе выртасшăн çапăçатчĕ: е аларан чавса илет, е ман çинчи витĕнкĕçе туртса антарать. Чееленме те пĕлетчĕ тата. Кравать айĕпе йăпшăнса пырать те Ваня урисем патĕнчен утиял айне пуçне чиксе кĕрсе каять. Унтан шуса пырса упăшка çумне вырнаçать. Ваня вара пĕрре мана ачашлать, тепре – кушаккине.

Кушака та хĕрхенеттĕм, вырăна та вараланттарас килместчĕ. Вара упăшка çывăракан енне пукан лартса патăм. Пуканĕ çине кивĕ çемçе çитти сарса хутăм. Аранăран вĕренчĕ Мурка хăйĕн вырăнĕнче çывăрма.

Тепĕр япалана та вĕрентрĕм кушака. Эпĕ урай çунă чухне тултан кĕретчĕ те пылчăклă урисемпе вăшт кăна чупса кĕрсе каятчĕ хăй хыççăн шăрса пек йĕр хăварса. Эпĕ ăна ятлаттăм. Каялла алăк патне илсе пыраттăм та нӳрĕ татăкпа урисене шăлса тасататтăм, тин урай тăрăх чупма ирĕк параттăм. Çакна та хăнăхрĕ кушак. Çуллахи вăхăтра /хĕлле вĕсен урисем ахалех тап-таса/ алăкран кĕрсен малтан чарăнса тăрса ман çине пăхса илет. Нимĕн те шарламасан хуллен-хуллен пусса малалла иртет. Енчен те эпĕ:

– Мурка, тăхта! – тесен урисене тасатса ярасса кĕтет.

Кушак питĕ ăслă чĕр чун. Ыттисенчен чуна çывăхрах вăл.

■ **Роза ВОЛКОВА.**
Вăрнар районĕ,
Калинино сали

# «Салам, Сочи!»

***Çакнашкал ятпа Олимп тата Паралимп вăййисен тĕп хулинче Пĕтĕм Раççей çамрăкĕсен спортпа вĕренӳ фестивалĕ иртнĕ.***

Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа спортпа туслаштарас, сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарас, Олимп юхăмĕпе паллаштарас тĕллевпе йĕркеленĕ фестиваль çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен çĕр-çĕр ачана пухнă. Унта Канашри 3-мĕш вăтам шкулта вĕренекенсемпе педагогсем те çитсе килнĕ. Мероприятире Чăваш Ен команди хăйсемпе тата тăван енпе паллаштарнă, пирĕн республикăри паллă спортсменсем çинчен каласа панă, «Тĕнче – чăрмавсăр» конкурсра тупăшнă, «Тарават Раççей» курава хутшăннă тата ытти те. Çавăн пекех пирĕн ентешсем Паралимпиада уçăлнине халалланă уявра пулнă, биатлонçăсемпе йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсенче хамăр спортсменсемшĕн «чирленĕ».

**А.МИХАЙЛОВ.**

# Пирвайхи çитĕнӳ

***Пĕлтĕр «Профиль инженери-техника класĕсем» республика проекчĕпе килĕшӳллĕн Çĕмĕрлери 3-мĕш вăтам шкулта инженери класĕ уçăлнă. Палăртмалла: республикăра çакнашкал 85 класс ĕçлет.***

Çак тапхăрта вĕренекенсем роботсем пухнă, вĕсем валли программăсем хатĕрленĕ, тĕрлĕ ăмăртăва хутшăннă. Акă нумаях пулмасть çамрăк инженерсем Тăвайра иртнĕ турниртан çĕнтерӳпе таврăннă. Çĕмĕрле шкулĕн чысне унта икĕ команда хӳтĕленĕ. Конкурсра ачасен хăйсем ăсталанă роботсемпе паллаштарнă, турнирсенче вăй виçнĕ. Роботсен ăмăртăвĕнче вĕсен «тусĕ» финиша пĕрремĕш тухса çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ. Ку – Çĕмĕрле инженерĕсен пирвайхи çитĕнĕвĕ.

**О.МАСЛОВ.**

# Карăкçырми ачисем улах ларчĕç



*Вăрмар районĕнчи Карăкçырми ялĕнчи садике çÿрекен ачасем Культура çулталанăкне халалланă улах касне пухăнчĕç.*

Чăваш йăлипе килĕшÿллĕн яшсемпе хĕрсем уява илемлĕ çи-пуçпа килнĕ. Çак тĕллевпех эпир те ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе хитре тумсем хатĕрлерĕмĕр. Ялти ал ĕç ăсти Елюк аппа патне хăнана кайрăмăр. Вăл пире килте упранакан асамлă арчине уçса кăтартрĕ. Мĕн кăна çук-ши унта! Тĕрĕллĕ ал шăллинчен пуçласа çăпата таранах. "Ĕлĕк чăвашсем пурте хуйхă-суйхă ан кĕтĕр, чир-чĕр ан ертĕр тесе кашни япалана тĕрĕпе капăрлатнă", – ăнлантарчĕ пире Елюк аппа. Кил хуçи хĕрарăмĕ ал ĕç тума сĕнсен вĕренекенсем хаваспах ĕçе пуçăнчĕç. Хĕр ачасем кĕнчелепе çăм арларĕç, арçын ачасем хăва хуллинчен карçинкка аврĕç.

Ĕлĕк чăвашсем ĕç хыççăн ваййа васканă. Эпир те çак йăлана пăхăнас терĕмĕр. Ура хуçса ташларăмăр, "Урам айкки – кăвак çеçке", "Çерем ватса вир акрăм", "Чăваш ачи" юрăсене шăрантартăмăр. Уяв вăййăсăр епле ирттĕр-ха! Пĕчĕккскерсемпе лашалла выляраăмăр. Улах касĕ пурне те килĕшрĕ, уйрăмах ашшĕ-амăшĕ кăмăллă юлчĕ. Шкул директорĕ Галина Архипова пĕчĕк артистсене ăшă сăмахсемпе хавхалантарчĕ. "Чăваш халăхĕн йăли-йĕркине манманни – питĕ лайăх", – терĕ вăл.

Аваллăхсăр пуласлăх çук. Çавăнпа ача-пăчана чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе, кун-çулĕпе, юрри-ташшипе пĕчĕклех паллаштарни питĕ пĕлтерĕшлĕ.

■ **Надежда АЛЕКСАНДРОВА, Ирина ЛЬВОВА, воспитательсем**

*Çĕнĕ кĕнеке*

# Тăван чĕлхе словарĕ



Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ тата Чăваш кĕнеке издательстви «Чăваш чĕлхин ăнлантарулла сăмах словарĕн» иккĕмĕш томне кун çути кăтартнă. Пĕрремĕш кăларăма, вăл 2011 çулта пичетрен тухнăччĕ, А сас паллирен пуçласа И сас палли таран пуçланакан сăмахсем кĕнĕччĕ. Çĕннинче вара – Й тата К сас паллисемпе пуçланаканнисем.

Словарьте лексика пирки тĕплĕн чарăнса тăнă, уйрăм сăмахсене, çавăн пекех çирĕпленнĕ сăмах çаврăнăшĕсене ăнлантарса панă, семантика тытăмĕ, стилистика хаклавĕ тата ытти пирки те вуласа пĕлме пулать. Тĕслĕхсене илемлĕ литературăран, публицистикăран, фольклортан илнĕ.

«Чăваш чĕлхин ăнлантарулла сăмах кĕнеки» çичĕ томран тăмалла, унта 100000-е яхăн сăмах тата литература чĕлхипе калаçура усă куракан сăмах çаврăнăшĕсем пулмалла.

■ **Надежда ГЕОРГИЕВА**

*Мĕншĕн çапла калатпăр*

# Иккĕн выртса виççĕн тăрăр

Мĕн ачаран пĕрле ÿссе, шкула çÿресе, туслă пулса çитĕнсе çитнĕ хĕрпе каччăн хайсем кĕтнĕ вăхăт çитнĕ те туй туса пĕрлешме шухăшланă. Акă ĕнтĕ кĕрлесе туй пырать, хĕр енчисем каччă енчисене, лешсем хирĕç пулса, парăнмасăр мĕн кăна йĕкĕлтесе, тиркесе, шÿтлесе юрă юрламаççĕ-ши: каччи хăй пĕчĕккĕ те хырăмĕ пысăк иккен, хĕрĕ вара каска пуканĕ пек лутрашкер имĕш.

Юрласа-ташласа савăнсан юлашкинчен чарăнма та вăхăт. Туй мешехи вĕçленес умĕн çĕнĕ мăшăра хĕве хупас /кĕлете-и унта е уйрăм пÿрте-и/ ыра йăла пулнă. Çулланса çитнĕ çывăх тăванĕсем е туй пуçĕ хĕрĕпе каччине иккĕшне кăна хăварас умĕн ыра сунса кĕлĕ сăмахĕсем каланă вăхăтра: «Иккĕн выртса виççĕн тăрăр», – тесе пил панă. Ку ĕнтĕ «хĕве хупас йăла пирĕнччен пулнă, ÿлĕмрен ачапăча тĕлĕшĕнчен йышлă пулăр, «çĕнĕ кайăксемпе» савăнтарсах тăрăр» тенине тавлашнă. Çак кăçран тытăнса вĕсемшĕн вара чуп-чуп уйăхĕ пуçланнă.

Çакăн пек ыра йăла пирки Н.Ашмарин «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» акă мĕн çырать: «Иккĕн выртса виççĕн тăмашкăн пар. Аминь /моленье/ иккĕн выртса виççĕн тăрăр /III том , 96 стр./.

«Хĕве хупни – название свадебного обряда. Хĕве хупас – «На секрет запереть» /XVII том, 4 стр./. Асăннă йăла авалах саккунлă пулнă пирки эпир К.Ивановăн "Нарспи" поэминче "Тăхтаманпа Нарспие хĕве хупрĕç кĕлете" тенине вулама пултаратпăр.

Çавăнпа та хĕрпе каччăна кĕлете хĕве хупнинчен никам та тĕлĕнмен те, вăтанман та. Хĕрĕпе каччине те намăс пулман. Иккĕн выртса виççĕн тăрăр тени ытарлă, кусăмлă пĕлтерĕшпе ырă суннине çеç пĕлтернĕ.

■ **Роман ЧЕПУНОВ**

# Гороскоп

***Пуш, 17-23***

**Сурăх.** "Васкакан вакка сикет", – теççĕ. Çак ваттисен сăмахне асра тытса эрне пуçламăшĕнче /уйрăмах тунти кун/ нимĕнле ĕçе те ан пуçăнăр. Юн кун ĕçтешĕрпе çĕнĕ проектсем пирки канашласан та эрне кун çеç пĕтĕмлетÿ тăвăр.

**Вăкăр.** Сирĕн йăлтах пыл та çу тейĕн. Тăванăрсем пирки, шел те, апла калаймăн. Пĕрне васкавлă медпулăшу кирлĕ пулĕ /тунти кун/, тепри хыпаланнипе пысăк йăнăш тăвĕ /ырсарни кун/. Ачăрсем те лара-тăра пĕлмеççĕ. Ахăртнех, мĕн те пулин çĕмĕреççĕ /юн кун/.

**Йĕкĕреш.** Кăмăлăр çĕкленÿллĕ, анчах ăна хăшĕ-пĕри пăсма пикенĕ. Эрне пуçламăшĕнче /ахăртнех, тунти кунах/ тахçанхи юратăвăр алăкран шаккĕ, çавăнпах юн кун савнийĕр /мăшăрăр/ кĕвĕçмелли сăлтав тупĕ, асăр-аннĕр хушша-хуппа кĕрсе лару-тăрăва çивĕчлетĕ /кĕçнерни кун/, юлташăрсем çăмăлттайланатăр тесе ятлама хăтланĕç /эрне кун/.

**Рак.** Çитĕнÿ тумалли, вĕсем патне талпăнмалли эрне. Ĕç вырăнĕ, шалу виçи килĕшмест-и? Пуçлăхăр хăйĕн тивĕçĕсене сирĕн çине йăвантарни кăмăла хуçать-и? Кун пирки ертÿçĕрпе ытлари кун калаçăр.

**Арăслан.** Хăшĕ-пĕри юратнă çыннисĕр тунсăхланине туйĕ, çавăнпа юн кун тĕл пулма калаçса татăлĕ. Теприсем ăçта та пулин канма каяснăн, апла тăк отпуска çу уйăхĕн пуçламăшĕнчех илмешкĕн пуçлăхран халех ыйтăр.

**Хĕр.** Япăх мар эрне, çапах сăлтăрсем мĕн пур ĕçе тĕплĕ шухăшласа пурнăçлама сĕнеççĕ. Ыйту укça-тенкĕпе /ытлари кун/, документсемпе /юн кун/ çыхăннă пулсан – пушшех. Çанă тавăрса ĕçлемелле пулсан та асăр-аннĕре пулăшмалли пирки ан манăр – канмалли кунсенче вĕсем патĕнче аппаланăр.

**Тараса.** Тĕл пулусене каяймастăр /тунти кунпа эрне кун/, ĕçтешĕрсем чирленĕрен сĕм çĕрлеччен пуç çĕклемесĕр вăй хумалла пулĕ, укçа-тенкĕпе çыхăннă ыйтусем те уçăмланмаççĕ. Тунти кун каçхине юратнă çыннăрпа тĕл пулатăр, ятлаçнă пулсан унпа юн кун пĕр чĕлхе тупатăр.

**Скорпион.** Умăрта – кăткăс суйлав. Ăнсăртран тĕрĕс мар утăм туни пирки иккĕленетĕр, хăвăра шанмастăр. Ун пек ан пултăр тесен çак лару-тăру çинчен пĕлĕшĕре каласа кăтартăр /тунти кун/, тусăрсемпе канашлăр /юн кун/, кирлĕ тĕк специалистран пулăшу ыйтăр /кĕçнерни кун/.

**Ухăçă.** Хăвăра алăра çирĕп тытăр. Диетăна пăхăнăр /тунти кунпа ытлари кун/, пусăрăнчăк кăмăлăра çĕклеме май тупăр /кĕçнерни кун/, пухура ытлашши чĕрре ан кĕрĕр /эрне кун/, юратнă çыннăра кирлĕ-кирлĕ маршан ан тарăхтарăр.

**Ту качаки.** Çул çÿреве тухмашкăн ăнăçлă эрне. Аякри хулана командировкăна /тунти кун/, санаторие канма /кĕçнерни кун/ кайсан та телей кайăкĕ алăран вĕçерĕнмĕ. Ют регионсенчи партнерсемпе çĕнĕ проектсене сÿтсе явма, ăна пурнăçа кĕртмешкĕн укçа-тенкĕ тупма май килĕ /юн кун/.

**Шыв тăкан.** Кил-çурта хăтлăх кĕртессишĕн хыпкаланатăр. Юсав ĕçĕсем тума палăртнă-и? Юн кун пуçăнăр. Сĕтелпукана куçарса лартасшăн-и? Эрне кун аппаланăр. Тăванăрсене кĕрекене пухма кăмăл пур-и? Вĕсене шăмат куна йыхравлăр.

**Пулăсем.** Мĕн пур ĕçе ăнăçлă вĕçлес тесен çывăх çыннăрсене хăвăрăн шухăшăра ĕнентерме тăрăшăр /тунти кун/, ытлашши ан калаçăр /кĕçнерни кун/, кирлĕ пулсан специалистран сĕнÿ ыйтăр /эрне кун/. Канмалли кунсенчен кăмăл çĕклентĕр тесен килте алă усса ан ларăр, ăçта та пулин тухса кĕрĕр.

# Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 15.03 | + 3 | + 3 | |
| 16.03 | + 4 | - 1 | |
| 17.03 | + 2 | - 8 | |
| 18.03 | + 1 | - 11 | |
| 19.03 | - 2 | - 10 | |
| 20.03 | + 1 | - 10 | |
| 21.03 | + 2 | + 6 | |


чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР



УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор Ю.С.МИХАЙЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата кусăру пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64

коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru

корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95–Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13. 56-00-23 – издательство директорĕ.



РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÿСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.



Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 8220. Заказ 925.

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.